24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
МАРТ
21
ЭРНЕКУН
67 (5782) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ТЕХНИКĂЛЛĂ КУЛЬТУРĂСЕН ПЫСĂК ТУХĂÇЛĂХĔШĔН

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ, вăйла тухăçлă тĕштырăмăн кĕрешес задачăна кăтартса панипе пĕрлех, технически культурăсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене те палăртса хăварчĕ. Мари тата Мордва республикисемпе тунă договор тăрăх, пирĕн республикăн кăçал технически культурăсем енĕпе çакăн пек тухăçлăхшăн кĕрешмелле:

Гектартан вăтам шутпа йĕтĕн—3,7 центнер, кантăр сӳсĕ—4,7 центнер тата махорка—17 центнер туса илмелле. Çавăн пек ĕнтĕ виçĕ республикăн ăмăрту договорĕнче çирĕплетнĕ цифрăсем.

Пирĕн республикăра кантăр кашни колхозра тенĕ пекех акса тăваççĕ. Çавăн пекех йĕтĕн тата махорка тăвакан колхозсем те чылай. Асăннă культурăсем халăх хуçалăхĕнче мĕнтери кирли пуринпĕн те паллă.

Йĕтĕн-кантăр тата махорка туса илес ĕçри стахановецсен опычĕсем çав культурăсен тухăçне социализмлă ăмăрту договорĕнче кăтартнă хисеплерен чылаях ӳстерме май пуррине кăтартса параççĕ. «Факел» колхоз (Пăрачкав р.) иртнĕ çул кашни гектартан вăтам шутпа йĕтĕн 5 центнер таран туса илнĕ. Улатăр районĕнчи «Свободный труд» колхозри йĕтĕн тухăçĕ татах та пысăкрах: гектартан 8 центнер туса илнĕ. Йĕтĕн акса тунă кашни гектар колхоза 5 пин тенкĕ тупăш панă.

Йĕтĕн акса пысăк тупăш илнĕ колхозсем нумай. Пăрачкав районĕнчи «Трактор» колхоз государствăна йĕтĕн сӳсĕ парса 32.403 тенкĕ, «Трудовик» колхоз 47.405 тенкĕ, «Победа» колхоз 79.587 тенкĕ тупăш илме пултарнă.

Пĕтĕм республикипе илсен, чылай колхозсенче йĕтĕн-кантăр сӳсне çакăн пек пысăк туса илеймеççĕ-ха. Ку вăл колхоз правленийĕсем, çĕрĕç оргăнĕсем йĕтĕн-кантăр туса илес ĕçе чылай чухне хакламаннинчен, вăл культурăсене акмалли çĕр лаптăкĕшĕ пысăках мар, ăна мĕнле те пулин акса тукалăпăр, тесе шутланнинчен килет. Çавăнпа ĕнтĕ иртнĕ çулта хăшпĕр колхозсенче звеносем йĕркеллĕ ĕçлеймен, государствăна йĕтĕн-кантăр сӳсĕ тăратмалли плана тултарайман.

Технически культурăсене хакламанни кăçал та сисĕнет-ха. Чылай колхозсенче тĕштырăсем тăрăх çуракине начар мар хатĕрленеççĕ пулсан та, технически культурăсем тăрăх çак ĕç питех те кая юлса пырать. Йĕтĕн вăрлăхĕ республикипе мĕнпурĕ те 78 процент кăна хатĕрлесе хунă. Уйрăмăнах йĕтĕн акакан тĕп районсем: Пăрачкав, Кувакино, Çĕмĕрле районĕсем пит теначар хатĕрленеççĕ.

Çĕмĕрле районĕнче йĕтĕн 20 колхоза акаççĕ. Нумай колхозсенче йĕтĕн вăрри вĕлтрен ӳкипе хутăшнă. Ана ятарласа электромагнитнăй машинăсемпе тасатмалла. Анчах çак ĕç кунта пит вăраххăн пырать. Районра йĕтĕн вăрлăхĕ 250 центнер çитмест. Уйрăм колхозсенче ĕç çакăн пек: «Красноармеец» колхозăн кăçал йĕтĕн 90 гектар акмалла. Халлĕхе вĕсен вăрлăх 60 центнер çитмест.

Технически культурăсем тăрăх акана хатĕрленессинчи тепĕр пысăк ĕç—вăл звеносем тăвасси, кадрсем хатĕрлесси. Ку тĕлĕшпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче «Ялхуçалăх культурисен тухăçне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленире çакăн пек каланă:

«Йĕтĕн, кантăр, çĕрулми тата ытти техникăллă культурăсемпе сайра лартса тăвакан культурăсем акса тăвас çĕрте звеносен паха опытне шута илсе, колхозсене производствăллă бригадăсенче звеносем организацилеме, вĕсем çумне йĕтĕн, кантăр, махорка, çĕрулми, улăх-çаран курăкĕсем, пахча-çимĕç культурисемпе ытти культурăсем акмалли пĕр палла çĕр лаптăкĕсене çирĕплетсе пама сĕнес».

Ку енĕпе халĕ нумай колхозсенче ĕçсем начар. Çĕмĕрле районĕнче «сынсем халĕ вăрманта ĕçлеççĕ», тесе йĕтĕн акса тăвакан звеносем тума тытăнманна пĕрех. Егоркинăри «Большевик» колхозăн йĕтĕн 40 гектар акмалла. Вĕсем звеносем те туман, вăрлăх та çитĕлеклĕ хатĕрлемен. Пăрачкав районĕнче те звеносем пĕр колхозра—«Трактор» колхозра кăна тунă.

Махорка лартма звеносене организацилес ĕç те, çавăн пекех, хăй тĕллĕн пулса пырать. Иртнĕ çулта республикăра махорка лартса тăвакан звеносем 232 пулнă пулсан, халĕ вĕсем вунтăрăн кăна шутланаççĕ. Аçта звеносем тăвасси çине тимлĕн пăхаççĕ, унта звено ĕçĕн результачĕсем те лайăх. Илер акă Кувакино районĕнчи «Ударник» колхозри А. К. Тюрина юлташ звенин иртнĕ çулхи ĕçне. Ку звено 1937 çултанпа ĕçлет. Махорка тухăçĕ вĕсен çулран çул ӳссе пырать: 1938 çулта гектартан вăтам шутпа 15 центнер, 1939 çулта—58 центнер, 1940 çулта—63 центнер ытла махорка пухса кĕнĕ. «Ку вăл—юлашки виçе мар», теççĕ вĕсем. Анна Карповна Тюрина юлташ вăйлă тухăçлă махорка туса илес ĕçри чăн-чăн мастер. Иртнĕ çулта вăл Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă, ăна пĕчĕк кĕмĕл медаль парса наградаланă. 1941 çулта та ăна выставка участникĕ пулма тăратнă.

Çавăн пекех Вăрнар районĕнчи «Колхозница» колхозри махорка лартса тăвакан звено та пархатарлăн ĕçленĕ. Колхоз иртнĕ çул пĕтĕмпе 100 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ. Вăл шутран махоркăран илнĕ тупăш—38 пин тенкĕ. Ку колхозăн махорки пахалăх енĕпе районра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Кунта колхозниксем махорка пысăк тухăçлă культура пулса тăнине пит лайăх пĕлеççĕ, çавăнпа вăл ĕçе юратса тытăнаççĕ. Звено çулленех выränти тата минераллă удобренисем нумай хатĕрлет, махоркăна ир лартса хăварма тăрăшать. Махоркăна ир лартни—вăйлă тухăçлăх илессине татса парать.

Малта пыракан звеносен паха опытчĕсемпе пур колхозсенче те анлăн усă курни кирлĕ. Махорка, йĕтĕн, кантăр тăвас ĕçри стахановецсен опычĕсене ытти çĕре куçарасси—çĕрĕç оргăнĕсен, агрономсен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать. Технически культурăсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ĕçшĕн çĕнĕ йĕркепе хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени пит те паллă вырăн йышăнса тăрать. Йĕтĕн тата кантăр звенисен çакна пĕлсе тăрас пулать:

«Звено çумне çирĕплетнĕ çĕр лаптăкĕ çинче йĕтĕн-долгунец тата кантăр тухăçлăхĕн планне ирттерсе тултарнă звенори колхозниксем кашни звено валли планна палăртнинчен ирттерсе пухса илнĕ сӳсĕн виççĕмĕш пайне вăтам номер шучĕпе тата вăрлăхсен виççĕмĕш пайне илеççĕ.

Кунсăр пуçне, звено çумне çирĕплетсе панă йĕтĕн-долгунецпа кантăрăн пĕтĕм лаптăкĕ çинче колхоз звено валли çирĕплетнĕ планран ирттерсе пухса илнĕ сӳсне вăрлăхăн кашни центнерĕшĕн звенори колхозниксем çак культурăсен продукцийĕн кашни центнерĕн колхозри вăтам хакăн виççĕмĕш пайне илеççĕ, çак шута тĕп тӳлев тата колхоз илекен преми-надбавкăсем те кĕреççĕ».

Паллах ĕнтĕ, ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ йĕркепе техникăллă культурăсене акса тăвакан колхозниксене агрономи наукин кăтартăвĕсемпе, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕсемпе анлăн усă курма, татах та лайăхрах ĕçлеме, ĕç тухăçлăхне тата ĕçĕн пахалăхне хăваттăн хăпартма, çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе, ялхуçалăх çулне пур енĕпе те ăнăçлăн вĕçлеме мобилизапилĕ.

Технически культурăсем тăрăх çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем пысăк. Пур çĕрте те халех звеносем туса çитермелле, вĕсене тивĕçлĕ участоксем уйăрса памалла. Çуракине хатĕрленесси çакăн пек организациллĕ ĕçсемпех пĕтмест. Звеносен материаллăй базисене те халех çирĕплетмелле. Çитес кунсенчех вăрлăхсем туписа çитермелле, вырăнти удобренисем пухас плансене тултармалла, минераллă удобренисем ытлăн-çитлĕнех кӳрсе килес пулать. Çакăн çине уйрăмăнах Çĕмĕрле районĕнчи руководительсен тимлĕн çавăрăнса пăхни кирлĕ. Кунта чылай колхозсем технически культурăсем валли минераллă удобренисем кӳрсе килмен, вĕсем районри складра та çук-ха. Удобренисĕр технически культурăсен тухăçне ӳстерме май çук. Удобренисем пухас тĕлĕшпе çураки сывхариччен юлнă вăхăтпа туллин усă курас пулать.

Кăçал çур ир пуласса кĕтмелле. Çавăнпа та халĕ кашни кун, кашни сехет пит те хаклă. Техникăллă культурăсен акине кĕске вăхăтра тата йĕркеллĕ ирттерни 1941 çулта вăйлă тухăçлăх илес ĕçĕн ăнăçлăхне татса панине шута илсе, ку тĕлĕшпе çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленессишĕн çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Совет наукин паллă деятелĕсем. Вĕсене пĕрремĕш степеньлĕ сталинла премисем панă. Укерчĕн çинче (çулахайран сылтăмалла): академик **И. М. Виноградов**, артиллери генерал-майорĕ **П. А. Гельвих, академиксем Н. И. Мусхелишвили**, А. Н. Крылов, А. Н. Бах тата **Н. Н. Семенов.**

(ТАСС фото-хроники).

Чăваш республикинчи колхозниксем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине хĕрӳллĕн саламлаççĕ

Ĕçпе ответлеççĕ

ÇĔРПУ, мартăн 20-мĕш. (Телефон тăрăх). Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине районри колхозниксем пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. «Дружба», «Прожектор», «Ильич» т. ыт колхозсенче те çак постановленине радио тăрăх вуласа панине колхозниксем ушкăнĕ-ушкăнĕпе пухăнса итленĕ.

Мартăн 19-мĕшĕнче Лапра Кушкă ялсоветĕнчи «Шумашар», «Совет», «Родина» колхозсенчи активистсем—колхоз председателĕсем, бригадирсем, учительсем çак постановление радиопа итлеме подрайонри библиотека çуртне пухăнчĕç. Постановленине итленĕ хыççăн хĕрӳллĕ каласу пуçланчĕ. Вĕсем иртнĕ çулти ĕçсен цаха результачĕсене аса илнĕ май, умра тăракан ĕçсем çинчен активлăн сӳтсеявăрçç. «Совет» колхоз председателĕ Давыдов юлташ çапла каларĕ:

Пирĕн колхозра тăрăшса ĕçлекенсем сахал мар, вĕсем тырпул тухăçне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне пĕрмаях ӳстерсе пырассишĕн тăрăшаççĕ. Иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан сĕлĕ 19 центнер, тулă 17 центнер пухса илнĕ. Татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илме бригадăри колхозниксем те, начар тухăçлă тырпул туса илнĕ бригадăри колхозниксем те ĕçкунĕсеммĕн тупăша пĕр пекех илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те çаван пекех пулса пырать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçалхи мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени колхозниксене ĕçшĕн тӳлес тĕлĕшри йĕркесĕрлĕхсене пĕтерет. Вăл постановлени кашни колхоза мала тухма пулăшать, колхозăн общественăллă хуçалăхне тĕреклетсе пырассишĕн кĕрешме хавхалантарать. Пирĕн колхозниксем партипе правительствăн çак постановленине тулли кăмăлпа саламласа кĕтсе илчĕç. Тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксемшĕн сталинла тăрăшни çине ответлесе, эпир хамăр колхоза чи малта пыракан колхоз тăвассишĕн кĕрешме сăмах паратпăр. Пирĕн колхозниксем кăçал гектартан 120 пăт тĕштырă туса илме задача партрĕç. Хальхи вăхăтра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе юлашки ĕçсене вĕçлесе пыратпăр.

А. ПОРФИРЬЕВ.

Асаватри Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

120 пăтшăн кĕрешетпĕр

ЭЛЕК, мартăн 20-мĕш. (Телефонпа). Иртнĕ çулта пирĕн колхоз пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулчĕç. 1939 çултипе танлаштарсан, икĕ хут пысăкрах тухăçлă тырпул — гектартан 18-шар центнер тĕштырă туса илтĕмĕр. Çĕрулми, купăста т. ыт. пахча-çимĕçсене те йышлăн пухса кĕртрĕмĕр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те маллах кайса пырать. Сурăх фермисĕр пуçне, пур фермăсем валли те выльăхсем туянса çитернĕ. Сурăх ферми валли путексем илме колхозниксемпе контрактаци договорĕ турăмăр. Выльăх апачĕ çителĕклĕ.

Колхозăн общественăллă хуçалăхĕ вăйланса, тĕреклесе пырать. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнма тытăнчĕç. Иртнĕ çулта вĕсем ĕçкунĕ пуçне 4 кило ытла тĕштырă илчĕç. Кунсăр пуçне çĕрулми, пахча-çимĕçсем тата укçан чылай валеçнĕ.

Пирĕн колхозăн тырпул тухăçне хăпартма татах та пысăкрах майсем пур. Иртнĕ çулхи ĕçсем колхоз çĕрĕ пысăк тухăçлă тырпул пама пултарнине кăтартса пачĕç. Çĕре агротехника правилисем тăрăх ĕçлесе хатĕрлемелле, тислĕк тăкса çемçетмелле. Тата чи кирли — тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесси пулать.

Колхозниксене ĕçшĕн ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх тӳлемелли халиччехи йĕркепе тырпул тухăçлăхне ӳстересшĕн, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартассишĕн кĕрешме хавхалантарман. Вăйлă тухăçлă тырпул туса илнĕ бригадăри колхозниксем те, начар тухăçлă тырпул туса илнĕ бригадăри колхозниксем те ĕçкунĕсеммĕн тупăша пĕр пекех илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те çаван пекех пулса пырать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçалхи мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени колхозниксене ĕçшĕн тӳлес тĕлĕшри йĕркесĕрлĕхсене пĕтерет. Вăл постановлени кашни колхоза мала тухма пулăшать, колхозăн общественăллă хуçалăхне тĕреклетсе пырассишĕн кĕрешме хавхалантарать. Пирĕн колхозниксем партипе правительствăн çак постановленине тулли кăмăлпа саламласа кĕтсе илчĕç. Тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксемшĕн сталинла тăрăшни çине ответлесе, эпир хамăр колхоза чи малта пыракан колхоз тăвассишĕн кĕрешме сăмах паратпăр. Пирĕн колхозниксем кăçал гектартан 120 пăт тĕштырă туса илме задача партрĕç. Хальхи вăхăтра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе юлашки ĕçсене вĕçлесе пыратпăр.

А. ПОРФИРЬЕВ.

Асаватри Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Колхоз стройĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн

КАНАШ, мартăн 20-мĕш. (Телефонпа). Районри чылай колхозсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановление радио тăрăх вуласа панине коллективлăн итленĕ.

Районри колхозниксем çак постановление пит те пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ. Нумай колхозсенче колхозниксен пухăвĕсем пулса иртнĕ. «Красная звезда» колхозра ЦК ВКП(б) тата СССР Совнаркомĕ йышăннă постановление радио тăрăх панине итлеме 150 çын пухăннă. Радио тăрăх итленĕ хыççăн Прохоров колхозник çапла каланă:

— Ку постановлени пит те пысăк пĕлтерĕшлĕ документ. Вăл пире пуян та культурăллă пурнăç тума вăй-хăват парать. Пирĕн çĕршывра продуктсем тулăх пулмалла, социализмлă тăваш çĕршывăн пуянлăхĕпе вăй-хăвачĕ кашни кунах тĕреклесе тата çирĕплесе пымалла.

Прохоров юлташ колхозри хăшпĕр çитменлĕхсем çинчен те каланă. Сысна фермин заведующийĕ Кондратьев юлташ тата хăшпĕр фермăри работниксем лайăх ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах чăх-чĕп ферминчи работниксем начартарах ĕçлеççĕ, хăйсен планне тултарса пыраймаççĕ. Анчах вĕсене ĕçшĕн пурне те пĕр виçепех тӳлеççĕ.

— Ку постановлени, — тет Прохоров юлташ, — колхозăлă строя малашне те хăватлăн тĕреклетсе пымалли хĕпăшал. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлени, паллах, мĕнпур тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксене татах та чаплăрах çитĕнӳсемшĕн кĕрешме хавхалантарать.

П. СЕРГЕЕВ.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Партипе правительство панă заданине срокра тултармалла

Вăрман хатĕрлевĕн планне тултарасси хăрушлăх уйăрать. Вăрман промышленноçĕн чылай работниксем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисенчен график çирĕплетнĕччĕ. Çав графика тăрăх, вăрман хатĕрлевĕнче кунсерен çураннисем 20.780 çын, лашапа 24.830 çын ĕçлемелле, кашни кунах 42.550 фестметр вăрман касса хатĕрлемелле, 40.400 фестметр турттармалла.

Анчах республикăри районсенчен нихăшĕ те графика тултарса пыраймаççĕ. Тӳрех калас пулать: хăшпĕр районсен тата вăрманпромхозсен руководителĕсем, партипе правительство панă çирĕп заданине пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешес вырăнне, тĕрĕс мар çул çине тăнă. Ун çинчен ĕнер пулса иртнĕ радиоперекличка та лайăх кăтартса пачĕ. Сăмахран, Йĕпреç районĕнчен вăрманта кулленех çуран çынсем 1500, лашаллисем 1200 çын ĕçлемелле, анчах виçĕм кун лашапа 770 çын, çураннисем 663 çын кăна ĕçленĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кужиков юлташ — эпир графикпа палăртнă чухлĕ ĕç тата туртăм вăйĕ тăратма пултараймастпăр тесе, ĕçри сӳрĕклĕхе пытарса хăварма хăтланать. «Красная звезда», «Красный фронтовик» тата ытти колхозсен руководителĕсем те «ĕç вăйĕ, туртăм вăйĕ çук» тесе лараççĕ, çав вăхăтрах витесенче аллă утмăлшар лаша ĕçсĕр тăраççĕ, темиçе вунпăр çынсем нимĕн тумасăр ялта пурăнаççĕ.

Йĕпреç районĕ пĕрремĕш кварталра кĕрсен икĕ уйăх хушши ытла сӳрĕк ĕçлесе пычĕ. Халĕ ĕнтĕ квартал вĕçленесси патне çитсен, кунти çынсем çухалса кайнă. Вĕсем вăй-хала пухса вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн большевикла кĕрешес вырăнне, пуш сăмах çаптарма пуçланă. Район партипе правительство панă заданине ытлашшипех тултарма пултарать. Ĕçри хастарлăха хăпартни, плана тултарассишĕн тăрăшни кăна кирлĕ.

Вăрман работникĕсен те ĕçре хастарлăх тата плана тултарассишĕн пĕтĕм вăй-халпа тăрăшни çук.

— Партипе правительство панă заданине хăçан тултаратăр?—тесе ыйту парсан:

— Тултарма хăтланса пăхăпăр, — терĕ Феклистов юлташ (Çĕмĕрле, мехлесопункт). Наумов юлташ та (Улатăр) çавнашкалах сӳпĕлтетет.

«Плана тултарма хăтланса пăхăпăр» — çакăн пек кăмăл-шухăшпа ĕçлеççĕ вăрман промышленноçĕн хăшпĕр работникĕсем. Сурари трактор çулĕ начар ĕçлет. Трактормсем час-часах простой тăваççĕ. Пĕр тракторăн вентиляторĕ тухса ӳкнĕ, çийĕнчех çĕнĕ вентилятор вырнаçтарса лартман пирки, трактор 4—5 сехет ĕçсĕр тăнă. Иртнĕ вăхăтсенче трактор çулĕпе кашни кунах пиншер фестметр турттарнă пулнă, халĕ 250 фестметр е кăшт ытларах кăна турттараççĕ. Ăшă çанталăк тăнă чухне çулсене пăхман пирки вĕсем ванса пĕтнĕ. Çавна пула ĕç тухăçлăхĕ чакнă. Халĕ çулсене шывпа шăнтса хытараççĕ, анчах вăл çителĕксĕр пырать.

Хăшпĕр вăрманпромхозсенче колхозсенчен çуран е лашапа пыракан çынсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухмаççĕ, е вĕсене ĕç тупса памаççĕ. Сăмахран, Çĕмĕрле районĕнче каснă ывăçа шыраса çӳресе колхозниксем темĕн чухлĕ хаклă вăхăта сая яраççĕ. Çав вăхăтрах сывăхра выртакан каснă ывăçа турттармасăр выртарнă. Кунпа пĕрлех Улхашри колхозниксен пуçарăвне палăртса хăвармалла. Вĕсем сквозной бригадăсем организацилеме, çапла вара ĕç тухăçлăхне ик-виçĕ хут хăпартнă. Çак паха примера пуçарса пыраççĕ Çĕмĕрлери вăрман работникĕсем тăрăшмаççĕ.

Улатăр районĕнчи хăшпĕр колхозсем — Молотов ячĕпе тăракан, «Париж Коммуни» тата ытти колхозсем талăкра виçпĕр хутлаççĕ. Вĕсем те ĕç тухăçлăхне 30 процент ытла ӳстернĕ. Анчах Улатăр районĕнчи вăрманта ĕçлекен колхозсен лашисем сахал мар простой тăваççĕ. Вăл — лавсене пушатнă чухне ытларах пулать. Складсем ăнăр-тапăрсемпе тулса ларнă. Хăшпĕр колхозниксем, уйрăмăнах Кувакино районĕнчи колхозниксем, ĕçе тăхăр сехетре тухаççĕ, вунпĕр сехетре канаççĕ, вара кăнтăрла иртсен пĕр сехетрен ĕçрен таврăнаççĕ.

Вăрманпромхоз плана тултарнипе тултарманнине шута илмесĕрех лашасене çитерме колхозсене тивекен сĕлĕне 5 кун малтан парать. Хăшпĕр колхозсем 5 кунрн плана тултармасăрах вăрмантан каялла таврăнаççĕ. Çапла вара, темĕн чухлĕ сĕлĕ усăсăр сая каять. Вăрманта ĕçлекен лашасен таканĕсем, сӳсменĕсем, çунасем ванаççĕ, тилхепе-пăлвсем татăлаççĕ т. ыт. те. Анчах кунти тимĕрçе лаççисем, лаша кӳлмелли хатĕрсене юсамалли мастерскойсем шутсăр япăх ĕçлеççĕ, е вĕсене пачах организацилемен.

Вăрман хатĕрлес ĕç мĕншĕн кая юлса пырать?

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вăрман хатĕрлевĕнче çурран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен постановлени йышăннăранпа икĕ уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Çак постановлени 1941 çулти пĕрремĕш кварталта вăрман хатĕрлес плана тултарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăрмар районĕн пĕрремĕш кварталта пĕтĕмпе 20 пин кубометр вăрман касса хатĕрлемелле тата турттармалла. Çак плана район ытлашшипех тултарма пултарать. Ăна вăрман хатĕрлевне лайăх хутшăннă колхозсем кăтартса параççĕ. Акă, сăмахран, Пĕчĕк Енкассинчи «Ударник», Çĕнĕ Мăнтăрти «Хĕрлĕ Шептах» колхозсем мартăн 10-мĕшне вăрман касса хатĕрлеме тата турттарма панă заданине пĕтĕмпех пурнăçларĕç. Кавалти «Маяк», Шăплатри «Радио» колхозсем касмалли заданине пурнăçларĕç. Çаксем ĕнтĕ Вăрмар районĕнчи колхозсем вăрман касса хатĕрлемелли тата турттармалли плана кашниех срокченех тултарма тата ытлашшипех тултарма пултарнине кăтартса параççĕ.

Палăхи куна илсен Вăрмар районĕнчи колхозсенчен вăрман касса турттарас плана тултарнисем пĕрĕн кăна шутланаççĕ. Район мартăн 10-мĕшне вăрман касас плана 64 процент, турттарассине 41 процент анчах тултарчĕ. Çине тăрса ĕçленĕ пулсан çак вăхăта район вăрман хатĕрлес плана тултарма та пултаратчĕ. Халĕ ку ĕç кая юлса карĕ. Çакă вăл район руководителĕсем вăл ĕçе тивĕçлĕ ертсе пыманнинчен килет. Вăрман хатĕрлес ĕçе малтанах кирлĕ пек тытăнмарĕç. Халĕ ĕç начар пынине курсан тин çине тăчĕç.

Т. КОЖИН.

В. И. Ленин сочиненийĕсен 4-мĕш изданине çырăнса илес ĕç

Çĕршывра В. И. Ленин сочиненийĕсен 4-мĕш изданине çырăнса илес ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Мускаври 55 магазинра 29 пин çын çырăннă. Библиотекăсенчен, аслă шкулсенчен, научнăй учрежденисемпе ытти учрежденисенчен 13 пин экземплярлăх подписка йышăннă. Тула, Орел, Свердловск, Львов, Черновицы, Брест, Дрогобыч хĕрисенче тата ытти нумай хуласенче те халăх хушшинче подписка ĕçне тупăрнĕ те ĕнтĕ.

Совет граждăнĕсен группи Франциран Мускава килсе çитни

Мартăн 18-мĕшĕнче Совет Союзĕн çĕнĕ граждăнĕсен пысăк группи Франци оккупацилемен районĕсенчен Мускава килсе çитнĕ. Вĕсем — Литвари, Латвири, Эстонири, Бессарабири, Хĕвеланăç Украинăпа Белоруссири рабочи-революционерсем, Испанин республикăллă çарĕнчи интернационаллă бригадăсен боецĕсем пулнă, нумай вăхăт хушши концентрацилле лагерьсенче тытса усранă сынсем.

Совет Союзĕн чиккисенчен пуçласа çул çинче тата Мускавра хăюллă боецсене МОПР делегацийĕсем ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Столицăн хисеплĕ хăнисем çав кунах ССР Союзĕнчи МОПР Центральный Комитечĕн канмалли çуртне тухса кайнă. Медицина комиссийĕсем вĕсенчен кашнин сывлăхне тĕрĕслесе пăхаççĕ, çакăн хыççăн вĕсене санаторисене сывалма яраççĕ.

Сывалнă тата каннă хыççăн вĕсем хăйсем çуралнă хуласене, хăйсен семьисене таврăнаççĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

КОММУНИСТСЕН РАЙОНСЕНЧИ ПУХĂВĔСЕМ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ

Çак кунсенче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн итогĕсем çинчен парти райкомĕн секретарĕ Г. Сахалкин юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик районри промышленноçра тата ялхуçалăхĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Районра промартельсем 6 тата инвалидсен артелĕ пур. Çак артельсем 1940 çулти плана 83 процент кăна тултарнă. Асăннă артельсен председателĕсем иртнĕ çулти çитменлĕхсене кăçал та шута илмеççĕ. Вĕсем кăçалхи 2 уйăхри плана тултараймарĕç. Артельсем туса кăларакан продукцин пахалăхĕ начар, анчах хакĕсем хаклă. 10 витре кĕрекен каткасене базарта 40—50 тенкĕпе илме пулать, Çĕнĕ Йĕкĕтри артель туса кăларакан каткасене сельпо магазинĕсенче 101 тенке сутаççĕ.

Районра вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕç те начар тăрать. Колхозсем валли транспорт инвентарĕсене ытларах туса кăларас тĕлĕшпе янăх ĕçлеççĕ.

Металлоширпотреб мастерскойĕ валли оборудованисем халĕ те илсе ситермен. Мастерскойра кулленхи графика тултарса пымаççĕ. Кирпĕч заводне юсаса пĕтерес ĕçе вăраха ярса пыраççĕ.

Вăрман хатĕрлемелли, туртгармалли план пурнăçланса пымасть. Мартăн 15-мĕшне вăрман хатĕрлес плана 66 процент ытларах кăна тултарнă.

Суракине хатĕрленес ĕçре те çитменлĕхсем пур-ха. МТС пысăк хăрушлăх умĕнче тăрать. Кунта тракторсене, ялхуçалăх машинисене юсас ĕç халĕ те вăраххăн пырать. Ку вăхăтчен 40 трактор кăна юсанă. МТС-че хуçасăрлăх пуçпулса тăнă пирки темиçе пиннер тенкĕлĕх пурлăх çĕрет. Ялхуçалăх машинисем юр айĕнче йĕпенсе выртаççĕ. 1937 çулта кӳрсе килнĕ ветродвигателĕн пайĕсене çухатса пĕтернĕ пирки ăна халĕ те вырнаçтарса лартман. Ĕç дисциплини начар, трактористсем хушшинче прогулсем тăвасси халĕ те пĕтмен-ха.

Районри чылай колхозсенче вика, клевер, çĕрулми вăрлăхĕсем çитмеççĕ. «Янмурзино», «2-ая Пятилетка», Ворошилов, Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче кăçал акса хăвармалли вăрлăхсем акма юрăхлă кондицине лармаççĕ.

Парти пухăвĕ районри фермăсенчи выльăхсен хисепне ӳстерес тата çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕçсем начар тăнине палăртрĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ çак çитменлĕхсене пĕтерсе пыма пулчĕ тата çаван пекех партин XVIII конференци решенийĕсене ырласа, вĕсене пурнăçа кĕртсе пыма татăклă решени ӳыщăнчĕ.

П. МАЙОРОВ.

СĔНТĔР

Коммунистсен мартăн 16-мĕшĕнче пулса иртнĕ районри пухăвĕ парти райкомĕн секретарĕ Федоров юлташ XVIII партконференцин итогĕсем çинчен туса панă доклада сӳтсе-явăрĕ.

Федоров юлташ хăйĕн докладĕнче районри артельсемпе райсовет исполкомĕн вырăнти промышленноçĕн мастерскойĕсем мĕнле ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ.

Артельсемпе мастерскойсем 1940 çулта 1.220 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Çапах та вĕсем хăйсен планĕсене 82 процент çеç тултарнă.

Черепица тăвакан мастерской хăйĕн планне çултан çулах тултарса пырайманть. Станоксемпе туллин усă курмаççĕ, рабочисемпе мастерсен рационализаторла сĕнӳсене шута илмеççĕ, вĕсене пурнăçа кĕртмеççĕ.

9 колхозра кирпĕч туса кăларакан производство пур. Вĕсем 1939 çулта 190 пин кирпĕч туса кăларнă пулсан, 1940 çулта 160 пин кирпĕч çеç туса кăларнă.

Вăрман хатĕрлесси тата турттарасси çителĕксĕр пырать. Вăрман хатĕрлев пĕрремĕш кварталти планне 60 процент, турттармалли плана 64 процент кăна тултарнă. «Ударник» колхоз (председателĕ коммунист Кожевников) мартăн 10-мĕшĕччен пĕр кубла метр вăрман хатĕрлемен тата турттарман.

Район ялхуçалăх енĕпе те юлса пырать. Иртнĕ çулта колхозсем вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлерĕç.

Машинно-тракторнăй станци 1940 çулти плана 87 процент кăна тултарнă.

Пренире тухса калакансем ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ вырăнти промышленноçа çителĕксĕр ертсе пынине, предприятисемпе артельсене тивĕçлĕ пулăшу паманнине палăртрĕç.

Коммунистсен районри пухăвĕ ĕçри çитменлĕхсене палăртса, вĕсене çийĕнчех пĕтерме, XVIII партконференцин решенийĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма пулчĕ.

Н. СТЕПАНОВ.

ЭЛĔК

Элĕк районĕнчи коммунистсен пухăвĕ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн итогĕсем çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе-явăрĕ. Ку ыйту тăрăх ВКП(б) райкомĕн секретарĕ М. П. Павлов юлташ доклад туса пачĕ.

Партин XVIII конференцийĕ кăтартса хăварнă çитменлĕхсем Элĕк районĕнче те пур. Ăна районри предприятисемпе промысла артелĕсем халиччен мĕнле ĕçлесе пыни аван кăтартса парать.

Государство промышленность предприятийĕсем (сӳс-кантăр, сĕт-çу заводĕсем т. ыт. те) тата аласталăх артелĕсем иртнĕ çулти производство плане 76,23 процент кăна тултарнă пулнă.

1941 çула кĕнĕренпе чылай артельсем хăйсен ĕçĕсене лайăхлатрĕç, 9 промысла артелĕсенчен 5 артелĕ хăйсен пĕрремĕш квартал планĕсене тултарса çитерчĕç. Ку пачах çителĕксĕр. Райлесзаг çав-çавах начар ĕçлет, пĕрремĕш квартал планне 25,33 процент кăна тултарнă. Çĕмĕрткассинчи промысла артелĕнче пуçа тăхăнмаллисем çĕлесси аван пырать, çав вăхăтрах çĕвĕ çĕлесси тата тĕрĕ тĕрлесси кая олать. Чĕртавар хатĕрлессишĕн кĕрешмеççĕ. Савнашкалах Кивĕ Маньăкри артельте хăйсен складĕнче мĕн чухлĕ чĕртавар пуррине пĕлмеççĕ. Район вăрман хатĕрлевĕнче юлса пырать.

Районра транспорт ĕçĕ начар, автомашинăсене тирпейсĕр тытăлаççĕ, ваннă машинăсене çийĕнчех юсаттармасăр чылай пайĕсене çухатса пĕтереççĕ. Автохуçалăхсем автомашинăсене лайăх пăхса усрассишĕн тăрăшмаççĕ.

Машинно-тракторнăй станци начар ĕçлет, иртнĕ çулхи плана тултарайман, 7 пин тенкĕлĕх убытка курнă, çунтармалли тата сĕрмелли япаласене 9700 тенкĕлĕх ытлашши расходланă. МТ Станцинче йĕркелĕх, тасалăх çук, мастерскойĕнче пылчăк хуçа пулса тăнă. Инструментсене тирпейсĕр тытăлаççĕ, ăçта килчĕ унта йăваланса выртаççĕ. МТС малтанхи вăхăтра тракторсене вăрахăн юсанă, графика пурнăçласа пыман. Çакна пула МТС халĕ тракторсене юсас тĕлĕшпе кая юлса пырать. Унта яланах штурмовщина йĕркипе ĕçлеме юратаççĕ.

Синерти çĕвĕ çĕлекен артельте тасалăхшăн, йĕркелĕхшĕн кĕрешмеççĕ, пуçарулăх çук, урайне эрнере пĕрререн ытла çумаççĕ. Ĕçе график тăрăх туса пымаççĕ, контроль çук. Çаксене пула товар пахалăхĕ те начар. Охверкинăри промартель вĕренсем явать, вĕренсен пахалăхĕ начар, вăл вĕренсене илекенсем ытла та сахал.

Предприятисемпе артельсенче таварсен хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн кĕрешмеççĕ.

Пренире 14 çын тухса каларĕç. Вĕсем пурте XVIII партконференци решенийĕсене пĕр кăмăлпа ырларĕç тата вăл решенисене мĕнле майпа пурнăçласа пыма кирлине кăтартса хăварчĕç.

Шепелев юлташ (сӳс-кантăр завочĕн директорĕ) сӳс-кантăр завочĕн ĕçĕсемпе çитменлĕхĕсем çинчен тухса каларĕ. Иртнĕ çулта сӳс-кантăр завочĕ 75 процент ахаль ларнă, кăçал та 50 процент чухлĕ ахаль ларма пултарать, чĕртавар çителĕклĕ мар, 50 процент кăна хатĕрленĕ. Завод патне пымалли çулĕр начар. Шепелев юлташ завода таврари колхозсенчи сӳс-кантăр ытларах акса тума сĕнет. Халĕ Элĕк районĕнче махорка ытларах акса тăваççĕ. çав вăхăтрах завод валли чĕртавар 120—150 километртан—Чкаловски, Куславкка тата ытти районсенчен тăратаççĕ.

Райплан председателĕ Иванов юлташ строительство материалĕсене (кирпĕч) вырăнтах туса кăларма май пурри çинчен калать. Элĕкре тимĕр-тăмăр мастерскойĕ уçма палăртнă.

Райпромкомбинат управляющийĕ Тихонов юлташ районри хăшпĕр предприятисем чĕртавар çук пирки хăйсен производствăллă планĕсене тултарса пырайманни çинчен чарăнса тăрать. Шураçри обозо-ремонтнăй мастерской хăйне валли йывăç турттарса килсе тăрайманть. Мăн Выльăри мастерскойра та çавнашкалах, кӳпчеклĕх йывăççем çук. Авнă тукунсем пур, урапа çапмалли цех ĕçлемест, ĕçлекенсем çук. Тимĕрç цехĕ те çын çук пирки ĕçлемест.

Куликов юлташ (МТС директорĕ) МТС ĕçне критикленине тĕрлĕрен объективлă сăлтавсемпе сирсе ямасăр хăтланчĕ.

Юлашкинчен ĕçсынни депутачĕсен районри Совечĕн исполком председателĕ Весновский тата ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем XVIII партконференци решенийĕсене пурнăçлассишĕн кашни пуçламĕш парторганизацин тата кашни коммунистăн çине тăрса ĕçлеме кирлине кăтартса пачĕç.

Коммунистсен пухăвĕ, пĕр саслă пулса, резолюци йышăнчĕ. Çак резолюцире пуху ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене ырласа, вĕсене хăвăртрах пурнăçа кĕртме практикăллă мероприятисем палăртрĕ.

Элĕк. («Чăваш Коммуни» корр.).

Çуракине хатĕр

ИШЛЕЙ. Доронин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта тухăçлă тырпул туçă илчĕ. Колхозниксем кăçал та гектартан 100 пăтран кая мар тĕштирĕ туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Палăхи куна вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа хунă. Плугсемпе сеялкăсем хатĕр. План тăрăх уя 575 лав тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, 775 лав кăларнă. 7 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 8 тонна фосфорит çăнăхĕ, 2 тонна сульфат аммонийĕ кӳрсе килнĕ. 100 тонна ытла торф кăларнă. 120 гектар çине юр тытса хăварнă.

Колхозăн кӳлмелли лашасем 25. Çуракине хатĕрленнĕ май лашасене аван пăхни кирлĕ. Çакна конюхсем яланах асра тытаççĕ. Витесенче таса. Кунта лашасене юратса пăхаççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, уçăлтарса çӳретеççĕ. Лаша кӳлмелли хатĕрсем юсавлă.

Анчах колхозăн çитменлĕхсем те пур. Агротехника вĕренĕвĕ сӳнсе ларнă. Кунтăн колхоз председателĕ С. Яичников юлташ айăпла. Вăл кружок руководителĕ пулнă, каярахпа ĕçлеме пăрахнă.

А. БАШКИРОВ.

Колхозсенчи парторганизацисем

Хĕрлĕ Чутай районĕнче колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисем 10 тата кандидатсен группи—1. Çак парторганизацисенчен нумайĕшĕ партиллĕ-массăллă ĕçе производствăллă ĕçпе çыхăнтарса, колхозниксене ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра туса пыма мобилизацилесе пыраççĕ.

«Мотор» колхозри пуçламĕш парторганизацинче 9 коммунист. Коммунистсен ӳшĕ пысăк мар пулсан та, вĕсем колхозниксен хушшинче политикăллă пысăк ĕçсем туса пыраççĕ, колхоза организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн тăрăшаççĕ. Ку колхозри кашни бригадăрах агитаторсем пур. Вĕсем докладсем тăваççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Çак парторганизаци хăйĕн пухăвĕсенче колхоз пурнăçĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсене тĕплĕн сӳтсе-явать. Колхозниксем социализмла ăмăртса ĕçлессине организацилесе пырать. Дисциплиннăна çирĕплетессишĕн кĕрешет. Парти организацийĕ лайăх ертсе пынине пула çак колхоз районра малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Колхоз вăтам шутпа кашни гектартан тĕштирĕ 100 пăт ытла туса илчĕ. Парти членĕ Селянкин юлташăн бригади гектар пуçне 20,4 центнер тырă пухса кĕртнĕ. Вăл бригада ĕçне лайăхлатма сахал мар вăй хурать.

«Красное Сормово» колхозри пуçламĕш парторганизаци те аван ĕçлесе пырать. Унта ВКП(б) членĕсем—9 тата 1 кандидат. Çак организаци колхоз правленийĕн ĕçне контроллесе тăрать, колхоз производствипе çыхăнса тăракан ыйтусене тăтăшах сӳтсе-явать. Колхоз председателĕнче коммунист, икĕ коммунист бригадирта, вылăх-чĕрлĕх фермисенче те коммунистсем ĕçлеççĕ. Парти членĕсемпе кандидатсем производствăра аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

«Красное Сормово» колхоз иртнĕ çулта тĕштирĕ вăтам шутпа кашни гектартан 19,7 центнер туса илчĕ. Çак колхозăн вылăх-чĕрлĕх продукчĕсем 80 пин тенкĕлĕх пулнă. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй комитечĕ колхоза иккĕмĕш степеньлĕ диплом, мотоцикл тата 5000 тенкĕ укçа парса наградăланă. Колхоз председательне В. П. Данилов юлташа Пĕчĕк ылттăн медаль панă.

Партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пуçланса кайнă социализмлă ăмăртăва пур колхозниксене те хутшăнтарса, партин пуçламĕш организацийĕ çуракине хатĕрленессипе пысăк çитĕнӳсем турĕ.

«Прогресс» колхоз çумĕнчи парторганизацинче (секретарĕ Ямбровский юлташ) 6 коммунист тăрать. Вăл пысăк ĕç туса пырать. Парти членĕ, вăтах ВКП(б) райкомĕн членĕ, Огандейкин юлташ колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Колхозра дисциплина çирĕп. Парти кандидачĕ Ф. Фондеркин юлташ бригади вăтам шутпа кашни гектартан 16,7 центнер тĕштирĕ туса илме пултарнă. Парторганизацин колхозниксем умĕнче авторитет пысăк.

Çав вăхăтрах районра начар ĕçлекен пуçламĕш парторганизацисем те пур. Ун пек парторганизацисем тырпул тухăçне ӳстерес, общественнăй хуçалăха аталантарса пырас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Вĕсем кивĕллех пурăнма çĕнничен аякалла пăрăнса юлма тăрăшаççĕ. Акă факт. 1939 çулта «Будготов» колхоз председателĕ парти членĕ Денисов тата Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Манин вăлах пуçламĕш парторганизаци секретарĕ, кĕрхи çĕртме планне тултармарĕç. Иртнĕ çулта çуракине те питĕ вăраха ячĕç. Çак колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пыман пирки тĕштирĕ гектар пуçне 9—10 центнер анчах пухса илнĕ.

Çак фактсем ĕнтĕ парти райкомне колхозсенчи парторганизацисемпе ертсе пырассине вăйлатмалла, вĕсене кулленех пулăшса пыма, партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăхлă задачăсене пурнăçа кĕртессипе таччăн çыхăнтарса туса пырассине кирлĕ пек йĕркелесе яма хушаççĕ. ВКП(б) членĕсемпе кандидатсене тата беспартийнăй большевиксене «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕреннĕ çĕрте куллен пулăшса пымалла.

Парторганизацисен пуху протоколĕсене пăхса тухнă хыççăн, акă мĕн курăнать: чылай парторганизацисем, сăмахран, «День урожая», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисем, хупă пухусем кăна туса ирттереççĕ.

ВКП(б) райкомĕн работникĕсем выраннсенче час-часах пулаççĕ пулин те, пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене тĕплĕн вĕренсе çитмесĕрех, кирлĕ пулăшăва памасăрах каялла тавраннаççĕ. Кун пек çитменлĕхсемпе малалла ниепле те килĕшме çук.

ВКП(б) райкомĕн колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисемпе таччăн çыхăнса ĕçлессине вăйлатмалла. Парти райкомĕн секретарĕсемпе инструкторĕсем пуçламĕш парторганизацисен хулленки ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕрмай пулăшмалла.

М. КУЗЬМИН.

ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ.

Ачасен 6-мĕш номерлĕ садĕнче (Шупашкар).
К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Финплана ытлашшипех тултарар

Пирĕн республикăра 1-мĕш квартали финанс планне тултарас ĕç питех те янăх пырать. Мартăн 11-мĕш тĕлне республикăра финанс планне мĕнпурĕ те 71,5 процент кăна тултарнă. Уйрăмăнах культсбор, обязательнăй страховани, заем укçи пухасси юлса пырать.

Укçа-тенкĕ пухассин 1-мĕш кварталти планне мартăн 11-мĕш тĕлне Ишлей районĕ 94,6 процент, Элĕк — 93,2 процент, Красноармейски — 93,2 процент, Калинински — 91,6 процент тултарнă пулсан, Йĕпреç районĕ — 62,9 процент, Куславкка — 51,6 процент, Первомайски — 58,2 процент, Çĕмĕрле — 57,1 процент, Октябрьски — 62,4 процент кăна тултарнă. Комсомольски, Пăрачкав, Вăрмар, Тăвай районĕсем хальччех пекех кая юлса пыраççĕ-ха.

Çак районсенчи руководительсемпе финорганăсем укçа-тенкĕ пухас ĕç тавра массăллă-ăнлантарулла ĕçе сарса яман, вĕсем укçа-тенкĕ парăмне юрих татма тăрăшман единоличниксем цирки нименле мерăсем те йышăнмаççĕ, ялсоветсемпе финанс работникĕсем хушшинче сарăлса пыракан социализмлă ăмăртăва ертсе пымаççĕ.

Чкаловски районри Кызыл-Чишма Тат-Темяш, Етĕрне районĕнчи Полянковка, Стрелец, Вăрмар районĕнчи Çĕнĕ Кавал, Çĕн Вĕренер, Сĕнтĕр районĕнчи Шупуç ялсовечĕсем ялти финанс активне, ялсовет депутачĕсене, агитаторсене укçа-тенкĕ пухас плана тултарма мобилизацилесе тата ĕççыннисем хушшинче массăллă-агитацилле ĕçе анлăн сарса янине пула 1-мĕш квартални финанс планне срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç.

Анчах республикăра укçа-тенкĕ пухас ĕçе пачах хакламан тата вăл ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларакан ялсовечĕсем те чылай. Вăрмар районĕнчи Анаткас ялсовечĕ финанс планне мартăн 1-мĕш тĕлне 24,9 проц., Аслă Пинер ялсовечĕ — 23,4 проц., Комсомольски районри Çĕн Тимĕрчкасси ялсовечĕ 35,2 процент ĕç тултарнă.

Квартал пĕтиччен шутлă кунсем кăна юлчĕç. Укçа-тенкĕ пухассин 1-мĕш квартални планне ытлашшипех тултарассишĕн кашни район, ялсовет тата финанс ĕçĕнчи кашни работникăн кĕрешмелле.

НОВИКОВА.

Комсодсен ĕçне вăйлатас пулать

Ĕççыннисем хушшинче перекет кассинсене укçа-тенкĕ хывтарас, харпăрхăй пурнăçпе пурлăхне страхлас тĕлĕшпе ăнлантарулла ĕçе сарса пынă çĕртсаван пекех тата заем укçине пухас ĕçре комсодсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Комсодсем лайăх ĕçленĕ çĕрте заем укçи пухасси те, страховани ĕçĕ те лайăх пырать, харпăрхăйĕн укçине перекет кассинче усракансен йышĕ те пысăк.

ЧАССР Нархозучечĕ, Промкасса, социальнăй обеспечени Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи комсодсем лайăх ĕçлеççĕ.

Çапах та Шупашкар хулинче калама çук янăх ĕçлекен комсодсем те сахал мар. Акă, сăмахран, ЧАССР Госпланĕ çумĕнчи комсода илер. Кунта ĕçлекен 24 çынран 14 çынĕ кăна харпăрхăйĕн пурнăçне тата пурлăхĕсене страхланă, местком председателĕ Филиппов юлташ страховани ĕçĕ мĕнле пыни çинчен пачах та пĕлмест.

Осоавиахим Центральный Советĕнчи комсод та йĕркеллĕ ĕçлесе пыраймасть-ха. Кунта ĕçлекен 44 çынран 15 çынна çеç страхлас ĕçе явăстарнă.

ВЦСПС секретариачĕ профсоюз организацийĕсене комсодсене пулăшса пыма, вĕсен ĕçне час-часах тĕрĕслесе тăма хушрĕ. Çак кăтартăва пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленипе профсоюз организацийĕсем комсодсене пулăшса пыма пуçларĕç. Сăмахран, Чкаловски районри государствăллă учрежденисенче ĕçлекенсен профсоюзĕн членĕсем хушшинче страховани ĕçне пĕр çынна та явăстарман пулнă. Çак тĕлĕшпе райместком председателĕ Абейдулов юлташ хăй те тăрăшса ĕçленине пула харпăрхăйĕн пурнăçĕпе пурлăхĕсене 63 çын страхланă. Ку енĕпе Чăвашрыбтрест çумĕнчи комсод та лайăх ĕçлет, унта ĕçлекен кашни çынна страховани ĕçне явăстарнă тата пурте заем çырăнса илеççĕ.

Государствăллă учрежденисенчи работниксен союзĕ тăрăх харпăрхăйĕн пурнăçĕпе пурлăхне 1031 çын кăна (40 проц.) страхланă. Ку пачах çителĕксĕр. Анчах райместкомсем страховани ĕçне анлăрах сарса ярас тĕлĕшпе çаплах начар ĕçлеççĕ-ха. Сĕнтĕрвăрри районĕнче государствăллă учрежденисенчи работниксен профсоюзĕн членĕнче 125 çын тăрать, çапах та вĕсене пĕрне те страховани ĕçне явăстарман. Калинински, Шăхасан, Канаш районĕсенче те ĕçсем çавăн пекех начар.

Страховани ĕçĕ янăх пыниттĕн госстрах работникĕсем те айăплă. Вĕсен страховани ĕçне тивĕçлипе ертсе пымалла, комсодсене куллен пулăшса пымалла. Анчах госстрахăн хăшпĕр работникĕсем (Матвеев) хăйсен учрежденийĕсенче страховани ĕçĕ мĕнле пулса пынине те пĕлмеççĕ.

Комсодсен ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе госстрахăн кашни работникĕ, профсоюз т. ыт. общественнăй организацисем тимлĕн ĕçлеме тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен комсодсем вĕсем государствăллă пысăк ĕç туса пыраççĕ.

С. Астафьев.

Государствăна çăмарта пама тытăнчĕç

ВĂРНАР. Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз государствăна çăмарта парас плана вăхăтра тултарма тăрăшать. Вăл çак кунсенче 600 штука çăмарта панă.

К. Ваньев.

Оборона значокĕсем илчĕç

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чăнкасси ялĕнчи çамрăксем оборона значокĕсен нормисене пама тытăнчĕç. ГСО, ПВХО тата ГТО значокĕсен нормисене 50 çын панă.

К. ФАДЕЕВ.

Колхозра паллă çынсем ӳссе çитĕнчĕç

ВĂРМАР. Кавалти «Маяк» колхозри колхозниксем хушшинчен юлашки çулсенче аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă квалификацилле специалистсем ӳссе çитĕнчĕç. Вĕсенчен вăтам шкулсен директорĕсемпе учительсем 27 çын, врачсем 3 çын, Хĕрлĕ Çар командирĕсем 5 çын. Аслă шкулсенче 21 çын вĕренеççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕнчи специалистсем те нумай вĕренсе тухнă.

«Маяк» колхоз хăйĕн чапа тухнă çыннисемпе савăнма та, мухтанма та тивĕçлĕ. Ялти колхозниксенчен 4 çын орденоносецсем.

Я. МАКАРОВ.

Физика урокĕсенче практикăллă хăнăхусем парас ĕçе вăйлатмалла

Партин XVIII съездĕнче Молотов юлташ çамрăксене малашнехи практикăллă ĕçре кирлĕ хатĕрлева вăтам шкулсенчех кăштах та пулсан памаллине асăрхаттарчĕ. Çак кăтартăва пурнăçа кĕртес ĕçре физика урокĕсем пирĕн пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Физика çутçанталăкри явленисемпе вĕсен законĕсем çинчен вĕрентекен наука пулса техникăпа та, оборона ĕçĕпе те, ялхуçалăхĕпе те тачă çыхăнса тăрать. Çавăнпа та вăтам шкулти физика курсĕ вĕренекенсене теориллĕ пĕлӳсемпе пĕрлех вăл пĕлӳсемпе пурнăçра усă курмалли хăнăхусем те памалла. Унсăрăн теориллĕ пĕлӳсем хăйсен хакне çухатаççĕ. Практикăпа çыхăнса тăракан, çутçанталăка пĕлме тата ăна ĕçхалăхне кирлĕ пек улăштарма пулăшакан пĕлӳсем çеç пуçра çирĕп вырнаçса вĕренекенсене марксистла-ленинла мировоззрени параççĕ, ĕçе юратакан, коммунизммăн çирĕп кĕрешекен çынсем пулма хатĕрлеççĕ. Комсомолăн III съездĕнче В. И. Ленин çамрăксен умĕнче тăракан задачăсене палăртса çапла каланă: «...Электричество мĕн иккенне ăнланни çителĕксĕр; ăна промышленноçа та, çĕрĕçĕн те, промышленноçпа çĕрĕçĕн уйрăм отраслисене те техникăлла мĕнле ĕçе кĕртмеллине пĕлес пулать». Ленинăн çак сăмахĕсем учителĕн, уйрăмăнах физика учителĕн, хăйĕн ĕçне мĕнле туса пымаллине витĕрех кăтартса параççĕ.

Вĕренӳ материалне пурнăçпа çыхăнтарса вĕренекенсене практикăллă хăнăхусем парас ĕçре кăçалхи вĕренӳ çулĕ çитĕнӳсем кӳни палăрать. Анчах ку ĕç татах та ăнăçлăрах пулса пытăр тесен, кашни учителĕннех халиччен вĕрентӳре мĕнле çитменлĕхсем пулнине шута илни кирлĕ. Вĕренӳре теори практикăран уйăрăлса кайни, вĕренекенсен пĕлĕвĕсем формальнă пулса тăни, урăхла каласан, вĕренекенсем хăйсен пĕлĕвĕсемпе усă курса пурнăçри, практикăри ыйтусене татса пама пултарайманни — пысăк çитменлĕх. Çамрăксем вăтам шкултан тухсан е çăмăллăхсем çитменлĕхсем палăраççĕ: вăтам шкултан вĕренсе тухнисем хушшинче тарасапа япала йывăрăшне тĕрĕс виçме пĕлейменнисем, термометрпа усă курма вĕренейменнисем, ареометр тытса курманнисем, мензуркăпа япала калăпăшне туйма, простой электричество цепне тĕрĕс тума, амперметрпа вольтметра цепе тĕрĕс вырнаçтарма пултарайманнисем час-часах тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, пĕр-пĕр шĕвекĕн температурине виçнĕ чухне термометра малтан шĕвек ăшăнчен кăларса унтан тин миçе градусне пăхса сырса хуракансем пур. Е сывлăшри температурăна пĕлме кирлĕ пулсан, хăшĕсем термометра ртуть тултарнă шарикрен алăпа тытса шкала çине пăхаççĕ (паллах, термометр кăтарни сывлăшри температурăна пĕрпек пулаймасть, мĕншĕн тесен алăпа тытнă шарикре ртуть 30 градусран иртме пултарать). Тата электричество цепне çыхăнтарнă чухне проводсене изоляци урлах сыпăнтарса хуракансем те пур. Ăна тăвакаçтă цепре ток çуккинчен тĕлĕнет, анчах хăйĕн йăнăшне тупма пултарайманть. Кунашкал фактсене татах нумайлатма пулать (вĕсене Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн 1-мĕш курснике кĕрекенсем хушшинчи сăнавран илсе кăтартнă). Физика задачисене шутлас ĕçе те нумай шкулсенче физика преподавателĕсем кирлĕ вырăна лартайман-ха.

Çак çитменлĕхсем пурте вăтам шкулта физикăна вĕрентес ĕçе хăвăртрах лайăхлатма кирли çинчен каласçĕ. Физика преподавателĕсен кашни урока хатĕрленнĕ чухнех вĕренӳ материалĕсемпе çыхăнса тăракан, çутçанталăкри явленисене, техникăпа ялхуçалăх ыйтăвĕсене, вĕренекенсене мĕнле приборсемпе ĕçлеме хăнăхусем парассине тĕплĕн шута илсе палăртса хумалла. Практикăллă хăнăхусем парас ĕçре лабораторнăй занятисем питĕ паха вырăн йышăннине физика преподавателĕн яланах асра тытмалла; вĕсене ытларах туса иртерме пĕтĕм вăя хурас пулать. Простой приборсене алăйĕнчи паласенчен туса хатĕрлеме вĕренекенсен кружокĕсене организацилени часешлĕн те, физика кабинечĕшĕн те питĕ усăллă пулнине хăшпĕр шкулсенче лайăх ăнланса илнĕ. Физика преподавателĕн вĕренекенсем валли тĕрлĕрен техникăлла круксем (радио, фото, трактор, автомобиль, электротехника т. ыт. те) организацилес ĕçре пуçарса яраканĕ пулмалла, ертсе пымалла.

Халĕ, вĕренӳ çулĕ пĕтес умĕн, çулталăкра мĕн вĕреннине тепĕр хут пăхса тухасси пуçланать. Повторени вăхăтĕнче преподавателĕн вĕренекенсене практикăллă хăнăхусем парас ĕçре пулнă çитменлĕхсене тӳрлетме чылай майсем пур: теориллĕ материалсене аса илнипе пĕрлех, вĕсем практикăра, пурнăçра тĕл пулнине, вĕсем мĕнле усă кӳнине конкретлă примерсемпе кăтартассине вăйлатсан, повторени урокĕсем вĕренекенсене интереслентерĕç, вĕсен пĕлĕвĕсем çирĕпленĕç. Повторени урокĕсенчех физика приборĕсемпе усă курма вĕренес ĕçри çитменлĕхсене тӳрлетме те майсем тупма пулать: вĕренӳ материалне аса илнĕ май, вĕренекенсенчех тĕрлĕрен приборсемпе паллаштарни, вĕсемпе усă курма вĕрентни, пĕчĕк опытсене вĕренекенсем хăйсем туса кăтартни питĕ паха пулĕччĕ. Вĕреннĕ материала тепĕр хут аса илнĕ ĕçре экскурсисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Суркунне ку ĕçе вăйлатмаллах. Елĕкрех ялти шкулсем физикăпа çыхăнтарса ирттермелли экскурси вырăнĕсем çывăхра сахал тупма пултарнă пулсан, халĕ ĕç йăлтах урăхла тăрать: кашни районрах промышленнăй предприятисем, МТС-сем, телефон, радиоузел т. ыт. те анлăн сарăлса пыни физикăллă экскурсисен хисепне ӳстерме май парса, вĕренекенсене практикăллă пĕлӳсем енчен хĕçпăшаллантарма пулăшмалла.

Кашни хăйĕн ĕçне юратакан физика преподавателĕннех физикăна вĕрентес ĕçе аванлатма, вĕренекенсене практикăллă хăнăхусем парассине тĕпренех вăйлатма пур майсем те пур. Тăрăшни, ĕçшĕн пĕтĕм вăя хуни, малта пыракан учительсен опычĕсемпе усă курса халиччен çитменлĕхсене пĕтерни çеç кирлĕ.

М. СТЕПАНОВ.

Чăваш АССР Наркомпросăн учительсен пĕлӳне хăпартакан институчĕ.

Агротехникăна вĕрентес ĕçе кулленех ертсе пымалла

Колхоз кадрĕсене агротехникăпа зоотехникăна вĕрентес ĕçе кăçал чи малтан ВКП(б) Тăвай райкомĕ пуçарса ячĕ. Çак пуçарăва парти Чăваш Обкомĕн бюровĕ ырларĕ, колхозра ĕçлекенсене агротехникăпа зоотехникăна вĕрентме пур çĕрте те стахановла шкулсем тата агротехника кружокĕсем организацилеме хушрĕ. Обком бюровĕн çав постановленине пурнăçа кĕртсе парти райкомĕсемпе райçĕрĕç пайĕсем колхоз кадрĕсене социализмлă çĕрĕçĕн стахановла меточĕсене вĕрентессине йĕркелесе ячĕç. Чылай колхозсенче стахановла шкулсемпе агротехника кружокĕсен занятийĕсем тăтăшах пулса пыраççĕ, вĕренӳре илнĕ пĕлӳсемпе практикăллă ĕçре усă кураççĕ.

Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче стахановла шкулсен занятийĕсем вăхăтра, йĕркеллĕ пулса иртеççĕ. Шкулсене колхозниксемпе колхозницăсем йĕркеллĕ çӳреççĕ. «Красная Чувашия» колхозăн агрономĕ Пирогов юлташ стахановла шкула лайăх, пĕлсе ертсе пырать. Шкулăн занятийĕсенче колхозри стахановецсем — Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем хăйсен паха опычĕсем çинчен лекцисем вуласа параççĕ. Колхозри пуçламĕш парторганизаци колхозниксене агротехникăна вĕрентес тата çуракине хатĕрленес ĕçсене тивĕçлипе ертсе пырать. Çав ыйтусем тăрăх парторганизацин пухăвĕнче тăватă хутчен сӳтсе-явнă.

Çак колхозра агротехникăна вĕренсе, ăна пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшаççĕ. 160 тонна минерăлла удобрени кӳрсе килнĕ, 3 пин тоннăна яхăн тислĕк, 1040 тонна торф хатĕрленĕ. Стахановла шкулсемпе агротехника кружокĕсенче партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин материалĕсене те вĕренеççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри стахановла шкулта вĕренекенсем хĕл каçиччен мĕн вĕреннине тепĕр хут тишкĕрсе тухаççĕ. Петуховпа Федоров юлташсем ялхуçалăхĕн уйрăм ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем вуласа параççĕ, консультацисем ирттереççĕ. Апрель уйăхĕн пуçламĕшĕнче стахановла шкулăн программине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, вĕренекенсен пĕрлешӳллĕ конференцийĕ пулса иртмелле. Колхозниксемпе колхозницăсем юлашки конференцине хатĕрленнĕ май, XVIII партконференци решенийĕсемпе паллашаççĕ. Партконференци материалĕсене вĕренсе пынă вăхăтра колхозра виçĕ пин лав тислĕк, икĕ пин лав торф хатĕрленĕ. Коммунистсем Н. Табаков, А. Качимов, Н. Павлов юлташсем колхозри ферма валли хăйсен пăрушĕсене контрактациленĕ.

Калас пулать, пур колхозсенче те мар агротехникăпа зоотехникăна вĕренесси йĕркеллĕ пырать. Тăвайĕнчи Шмидт тата Тĕмерти Смидович ячĕпе тăракан колхозсенчи стахановла шкулсен занятийĕсем февраль уйăхĕнче пачах пулман. Стахановла шкулсемпе агротехника кружокĕсенче агротехника, çаван пекех зоотехника ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем вулама уйăрнă районри специалистсем январь тата февраль уйăхĕсенче колхозсене кайса курман. Çĕрĕç пайĕн зоотехникĕ Чернова Тăвайĕнчех пурăнать пулсан та колхозниксем хушшинче пĕр лекци те вуласа паман. Григорьева агронома Лачкассинчи «Çăлтăр» колхоз çумне çирĕплетнĕ. Анчах вăл ноябрь уйăхĕнчен вара колхозра пачах пулман.

Районри колхозсенче агротехникăна вĕренесси вăйсăрланни — вырăнсенчи пуçламĕш парторганизацисемпе комсомол организацийĕсем тата вулав çурчĕсенче ĕçлекенсем стахановла шкулсемпе интереслемне пăрахнинчен, вĕсен ĕçĕсене контроль туса пыманнинчен килет. Хăшпĕр колхозсенче колхоз правленийĕсем çак ĕçе хакланманни курăнать.

Йăнтăрчри «Пламя» колхозри стахановла шкулăн ĕçĕсемпе ялсовет исполкомĕн председателĕ коммунист Воробьев тата колхоз председателĕ Иванов юлташсем пачах интереслемен, вĕсем занятисенче пачах пулман. Стахановла шкулта колхозниксем мĕн çинчен вĕреннине пĕлмеççĕ.

Пуçламĕш парторганизацисен колхозсенчи стахановла шкулсемпе агротехника кружокĕсен ĕçĕсене ертсе пымалла, кулленхи ĕçре тивĕçлĕ пулăшу памалла.

М. РАЗНОМАЗОВ.

Малта пыракан ферма

ЕТĔРНЕ. Кăташтри «Пионер» колхозăн таварлă сĕт-çу ферми районра малта пыракан фермăсенчен пĕри шутланать. Ферма 1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă, ăна 1941 çулта та выставкăра пулма кандидата тăратнă. Фермăри 92 пуç майракаллă шултра вылăхран 18 пуçне районри ăратлăх кĕнеки çине, 10 пуçне государствăн ăратлăх кĕнеки çине кĕртнĕ.

1940 çулта ферма кашни ĕнерен вăкăм шутпа 1622 литр сĕт суса илнĕ, 1941 çулта 1700 литр сĕт суса илме обязательство илнĕ. Фермăн январь уйăхĕнчи ĕçĕсене пăхсан, илнĕ обязательствăна ытлашшипех пурнăçлама пултарассине уççăнах курма пулать. 1940 çулти январь уйăхĕнче сăвакан 17 ĕнерен 3611 литр сĕт суса илнĕ пулсан, 1941 çулти январь уйăхĕнче 16 ĕнерен 4264 литр сĕт суса илнĕ. Вăл 1940 çулта январь уйăхĕнче кашни ĕнерен вăтам шутпа 212 литр, 1941 çулта январь уйăхĕнче 266 литр сĕт суса илни çинчен калать.

Ялсовет исполкомĕн депутачĕ Аниçия Иванова доярка фермăра пĕр улшăнмасăр 5 çул хушши ĕçлет. Хăйĕн ĕçне вăл питĕ лайăх пĕлет. Хăйне çирĕплетсе панă 7 ĕнерен 1940 çулти январь уйăхĕнче вăл 1436 литр сĕт суса илнĕ пулсан, 1941 çулти январь уйăхĕнче çав ĕнесленченех 1876 литр сĕт суса илнĕ. Ку вăл Иванова доярка сĕт суса илессине 130 процент ӳстернине пĕлтерет. Вăл сăвакан «Мельба», «Чернушка», «Маша» ĕнесем çулталăкра 2300—2500 литр сĕт параççĕ.

Фермăри пăрусене Анисия Иванова шăпăшĕ Ирина Иванова пăхать. Вăл та фермăра пĕр улшăнмасăр 4 çул хушши ĕçлет. Пăрусене вăл юратса пăхать. Вăхăтра кирлĕ чухлĕ апат парать, вăхăтра шăварать, тасатать. Кăçал çуралнă 25 пăруран пурте таса, мăнтăр, лайăх ӳсеççĕ. Акă, «Парбанкон» кунсерен 650 грамм, «Шадрова» —600 хутшăнаççĕ.

Фермăн тупăшĕ те çулран çулах ӳсе пырать: 1939 çулта ферма колхоза пĕтĕмпе те 24 пин тенке яхăн тупăш панă пулсан, 1940 çулта 26949 тенкĕ тупăш панă. Ферма государство умĕнчи парăмсене срокченех тултарать. Аш-какай тата сĕт-çу парассин 1941 çулти государство планне çуррине ытла тултарнă та ĕтнĕ.

Ферма заведующийĕ ялсовет исполкомĕн депутачĕ Егор Мальков юлташ хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет. Фермăра ĕçлекенсем валли зоокружок организациленĕ. Кружок занятийĕсем йĕркеллĕ пулса иртеççĕ.

Фермăра ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Зооветтехника кăтартăвĕсене лайăх пурнăçласа пыраççĕ. Çаксене пула ĕнтĕ ферма çулран çулах çĕнĕ çитĕнӳсем тăвать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Пахча-çимĕçсем тăвас ĕçе лайăх организацилер

Юлашки çулсенче Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем пахча-çимĕç туса илес кĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕç.

Пахча-çимĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Халĕ ĕнтĕ кашни колхоз пахча-çимĕççенчен çулсерен сахал мар тупăш илет.

1936 çулта районĕпе пахча-çимĕçсем 25 гектар çинче лартса тунă. Ун чухне купăстапа хăярсăр пуçне урăх культурăсене сахал акнă. Иртнĕ çулта колхозсем 161 гектар çинче тĕрлĕрен çимĕçсем туса илчĕç. Районра халĕ помидор, кăшман, çăрăк, кишĕр, сухан, арбуз т. ыт. çимĕçсем акса, лартса тăваççĕ.

Чылай колхозсен парниксем пур. 1937 çулта районĕпе парник рамисем 70 çеç пулнă пулсан, кăçалхи январь уйăхĕнче 1305 рамăна çитнĕ. Кунсăр пуçне тата 75 тăваткăл метр пысăкĕш теплица пур.

Пахча-çимĕçсен тухăçлăхне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе уйрăм колхозсем пахча тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă, Тукас ялсоветĕнчи «Комбайн» колхоза илер. Колхозра пахча-çимĕç тăвас тĕлĕшпе уйрăм бригада организациленĕ, ăна П. Кадеев юлташ ертсе пырать. Вăл тăрăшнипе колхоз 1939—1940 çулсем хушшинче вăтам шутпа кашни гектар пуçне купăста 474,1 центнер, хăяр 348 центнер туса илнĕ.

Кăмаша ялсоветĕнчи «Волга» колхозра П. Ксенцов юлташ бригади хăярпа томат ӳстерес тĕлĕшпе çитĕнӳсем турĕ. Виçĕ çул хушшинче вăл гектартан 302 центнер хăяр, 380 центнер томат илнĕ. «Молодая сила» колхоз (Савадеркино ялсовечĕ) гектар пуçне 256,48 центнер сухан, Пренеш ялсоветĕнчи «1-ое Мая» колхоз 350,06 центнер хăяр, Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз 306 центнер кишĕр туса илчĕç.

Юлашки 3—4 çул хушшинче сад ĕçĕне те чылай улшăнусем пулчĕç. 1937 çулччен 22 ялта сад пулман пулсан, халĕ вĕсен хисепĕ виçĕ хута яхăн чакнă. Иртнĕ çулта садсен лаптăкĕ 110,5 гектар шутланнă (1937 çулта 10 гектар пулнă). План тăрăх 1940 çулта улмуççисемпе тĕрлĕрен çырла йывăççисем 24 гектар çине лартмалла пулнă, 40 гектар çине лартнă. Икĕ колхозра питомник пур, вĕсенче пĕр çулхи улмуççисем 2500 штука, сыпнисем 4250 штука.

Мăн Улхаçри «Красноармеец» колхозăн 10 гектар пысăкĕш сад пур, ăна çак çулсенче кăна тунă. Улмуççисене лайăх пăхса усранипе çак виçĕ çул хушшинче лартнисенчен 96,7 проценчĕ чĕрĕлнĕ, çулсерен вĕсем 46 сантиметр тăршшĕ ӳснĕ.

Вăрман Тăван ялсоветĕнчи «Самолет» колхозăн сад вырăнĕ 3,5 гектар йышăнать. Сад ĕçне туса пыма колхоз хастарлă колхознике А. Кузьмин юлташа уйăрнă. Вăл лайăх пăхнипе улмуççисем вăтамран кашни çул 49 сантиметр ӳсеççĕ, лартнисенчен 97 проценчĕ чĕрĕлнĕ.

Уйрăм бригадăсем ĕçре лайăх результатсем кăтарнă. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕç илчĕç. Иртнĕ çулта сад тăвас тĕлĕшпе кăна виçĕ колхозри бригадир-садоводсем выставка участникĕсем пулнă, пахча-çимĕç тăвас енĕпе 2 çын пулнă. Кăçал выставка участникĕсен хисепĕ татах та ӳсет, пахча-çимĕç бригадисенчен 6 çынна кандидата тăратнă.

Кăçал колхозсен тĕрлĕрен пахча-çимĕççем 185 гектар çине лартмалла. Чылай колхозсенче халĕ ĕç хĕрӳллĕн пырать. Пахча-çимĕççем лартмалли вырăна 3440 лав тата çамрăк улмуççисем хушшине 2.300 лав тислĕк тăкнă.

Район иртнĕ çулта вăтамран гектар пуçне пахча-çимĕççем 78 центнер туса илнĕ. Кăçал, паллах, вăл чылай ӳсмелле. Кашни колхоз хăй умне кăçал тырпулсемпе пахча-çимĕççен тухăçне ӳстерес задачăна лартнă. Çавна вĕсем ăнăçлăн пурнăçлĕç.

Е. ЕФИМОВ.

Çĕмĕрле райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Производствăри мастер

Чăваш Стройтресчĕн строительство валли тĕрлĕ кирлĕ детальсем тăвакан завод пысăках мар, унта пурĕ 65 çынна яхăн ĕçлеççĕ.

Çак заводра мастер пулса 3 çул ĕнтĕ ВКП(б) членĕ Евгений Павлович Смолов юлташ ĕçлет. Смолов юлташ лутрарах пӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ çын. Вăл çырăва сахал вĕреннĕ. Анчах столяр ĕçне вара аван пĕлет. Вăл мĕнле ĕç пынине цехăн пĕр вĕçĕнчен пăхсанах чухласа илет. Завода килсенех вăл кантăк рамисем, алăксем туса пурăннă. Лайăх ĕçленине кура ăна мастера лартнă. Халĕ вăл заводра старший мастер.

Иртнĕ çулсенче заводра материалсем кирлĕ таран пулманнипе завод хăйĕн производствăллă планне тултарайман. Тата мастерĕ те хăйĕн вырăнĕне пулман. Мастерăн завода çитмен япаласене шыраса тупмалла пулнă, мастер та ытти рабочисемпе пĕрлех ĕçленĕ: «хăш чухне хамăн урай шăлмалла пулатчĕ. Е тата рабочисене инструментсем шыраса тупса паратăп. Çавăнпа хамăн ĕçе туса пыраймастăмччĕ»,—тесе пĕлтерет Смолов юлташ.

Халĕ ĕнтĕ ĕç урăхла. ВКП(б) XVIII конференцийĕ пулса иртнĕренпе заводра ĕç улшăнса пырать. Ĕçе график тăрăх, кашни рабочи мĕн чухлĕ ĕç тумаллине палăртса панă. Мастер Смолов юлташ ирхине ĕçе пырсанах рабочисене мĕн ĕçлемеллине, мĕн чухлĕ норма тумаллине ăнлантарса парать. Каçхине хăш рабочи мĕн чухлĕ ĕçленине палăртса тăвать.

Çапла ĕçлесе пынипе завод производство планне февраль уйăхĕнче 106 процент тултарнă. Март уйăхĕнче план татах та ытларах туласа шанма пулать. Кăна çакăнтан курма пулать: фрезернăй станок çинче ĕçлекен А. И. Ялхимов ĕç нормине 147 процент тултарса пырать. Çаван пекех Жилин юлташ 121 процент, Ефимов юлташ 112 процент тултараççĕ. Сверлильнăй станок çинче ĕçлекен Мария Ивановна Верховцева юлташ 107 процент тултарать.

Комсомолецсем Семенов тата Фоминых юлташсем ученик вырăнĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем те ĕç нормине 105-шер процент тултараççĕ.

— Ку пирĕн заводра пулас мастер. Питĕ ăнăçлăн ĕçлет. Хăйĕн ĕçне юратса тăвать,—тесе кăтартать Смолов юлташ Семенов комсомолец çине.

Смолов юлташ çамрăксене вĕрентес тĕлĕшпе те питĕ тăрăшса ĕçлет. Стахановец Ефимов, Семенов т. ыт. юлташсем пурте Смолов юлташ вĕрентнĕ çынсем. Çавăнпа та ку заводри рабочисем мастер Смолова хисеплеççĕ, вăл хушшине итлеççĕ. Ĕçре мĕнле те пулсан кансĕрлĕх пулсан, унран ыйтса пĕлеççĕ.

Смолов юлташ рабочисене пĕр енлĕ профессине çеç мар, тĕрлĕ детальсем тума та вĕрентет. Рабочисем тĕрлĕ ĕç тума пĕлни питĕ те кирлĕ. Сăмахран, Ефимов юлташ рама çыхма ăста, алăк деталĕсене тăвать, вăлах строгальнăй станок çинче ĕçлет.

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Укерчĕк çинче: Стройтрестăн стройдетальсен заводĕнчи мастер Е. П. Смолов юлташ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Пирĕн малтанхи ĕçсем

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн материалĕсене пичетленĕ хăçатсене илсенех Канашри чугунçул станцинчи пуçламĕш парторганизаци вăл материалсемпе рабочисемпе служащисене тĕплĕн паллаштарма тытăнчĕ. Парторганизаци коммунистсемпе агитаторсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетрĕ, агитаторсен семинарне ирттерчĕ. Çакăн хыççăн агитацилле-массăллă ĕç пуçланчĕ. Ку таринччен агитаторсем рабочисемпе служащисене Маленков, Вознесенский юлташсен доклачĕсенĕ, конференци решенийĕсене вырăнти фактсемпе çыхăнтарса ăнлантарса панă.

Партконференци материалĕсене сӳтсе-явнă чухне чылай рабочисемпе служащисем станци ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртса, вăл çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса панă. Анчах артель правленийĕ производство ĕçне партконференци решенийĕсем тăрăх урăхлатса çĕнетме тытăнман-ха.

Производство планĕ тăрăх, артелĕн март уйăхĕнче вăтам ремонт туса 4 автомашина, капитальнăй ремонт туса 1 автомашина, текущи ремонт туса 4 автомашина тата 6 мотор юсаса кăлармалла. Кунсăр пуçне артель кулленех кирлĕ таварсем тăвать. План тăрăх март уйăхĕнче 300 витре, 70 умывальник, 525 кровать тумалла. Артельте велосипедсене, самоварсене никельпе якатаççĕ, ялхуçалăх машинисене тата ытти промышленность оборудованийĕсене юсаççĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, артелĕн паха продукцисем туса кăлармалла. Апла пулсан та, артель производство планне кирлĕ пек пурнăçласа пымасть.

Партконференци предприятисене пурне те çирĕп график тăрăх ĕçлеме хушрĕ. «Авторемонт» артель графикпа ĕçлесси çине куçма тытăнман. Çаван пекех, мĕн чухлĕ продукци туса кăларнине те кашни кун учета илсе пымаççĕ. Артельре март уйăхĕн пирвайхи вунăкунлăкĕнче производство планне мĕн чухлĕ тултарнине тĕплĕн пĕлмеççĕ.

— Пысăк предприятисенче график тăрăх ĕçлемелле. Пирĕн артель пĕчĕк предприятисен хисепне кĕрет. Пире графиксăр ĕçлесен те юрать,—тет артель председателĕ. Çакă вăл кулленхи ĕç планне мĕнпĕн тултарса пыманни çинчен уççăн кăтартса парать ĕнтĕ.

Артель председателĕ каласа панă тăрăх, март уйăхĕнче 200 витре, 70 таз туса кăларнă. Витрепе таз туса кăларас плана ытлашшипех тултарнă. Ытти продукцисем енĕпе плана тултарасси хăрушлăхра тăрать. Ку уйăхра кроватьсем тата умывальниксем тума халĕ те тытăнман.

Производство оборудованийĕсемпе тата станоксемпе туллин усă курмаççĕ.

Учетпа йĕркелĕх çук çĕрте

Шупашкарти «Авторемонт» артельте XVIII партконференци решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн производство ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. Маленков юлташ конференцире тунă докладра илсе кăтартнă йĕркесĕрлĕхсем ку артельте те пур. Артельти рабочисем производство ĕçне чăрмав кӳрекен, кулленхи ĕç нормине тултарма кансĕрлекен çитменлĕхсене çĕтермелли майсене кăтартса панă. Анчах артель правленийĕ производство ĕçне партконференци решенийĕсем тăрăх урăхлатса çĕнетме тытăнман-ха.

Артельте туса кăларакан продукци пахалăхĕшĕн тивĕçлипе кĕрешни çук. Умывальниксемпе витресем шыв тытмаççĕ. Çакăн пирки суту-илӳ организацийĕсем витресемпе умывальниксене каялла тавăрса панă.

Кашни предприятирех производство оборудованийĕсемпе чĕртаварсене пурне те тĕплĕн учета илсе, вĕсемпе тĕрĕс усă курни кирлĕ. Çакăн пек тунипе нумай предприятисем пысăк экономи тăваççĕ. «Авторемонт» артельре чĕртаварсене учета илмеççĕ. Завод картишĕнче темиçе тонна тимĕр сапаланса, юр айĕнче выртать, вĕсем тутăха кайнă. Цехсенче те тимĕр куписем нумай выртаççĕ. Вĕсен хушшинче ĕçре усă курмалли япаласем тата инструментсем те сахал мар. Туса кăларнă кроватьсем усă çĕрте, юр çинче лараççĕ.

Цехсенче тасалăх çук. Кашни ура пусмассеренех гайкăсем, болтсем выртаççĕ. Моторсене тĕрĕсленĕ çĕрте бензинпа машин çăвĕ юхса выртать. Йĕркелĕх çук пирки темĕн чухлĕ тимĕр т. ыт. сая каяççĕ.

Артель заказсене вăхăтра пурнăçламасть. Артель триерпа силосорезка юсама илни пилĕк çул ытла иртсе кайнă. Вĕсене паянхи кунччен те юсаман, юр айĕнче тутăха лараççĕ. Триерпа силосорезкăна ремонт тума панă колхозсем те хăйсен пурлăкĕсем çине хуçасăрла пăхаççĕ. Вĕсем машинăсене юсама пани пилĕк çул иртнĕ пулсан та артеле пырса курман. Вăхăтра пурнăçламан заказсем татах та пур. Вăл хисепрен хаклă машинăсем те нумай. Завод картишĕнче кашни кĕтесрех ванчăк автомашинăсем юр айĕнче лараççĕ.

Артель правленийĕ автомашинăсене заказ паракан организацисен материалĕсемпе ремонт тăвать. Заказчиксем кирлĕ хатĕрсене вăхăтра тупса памаççĕ. Çакăн пирки автомашинăсем çулталăк ытла ремонтра лараççĕ.

Укерчĕк çинче: «Емĕт» колхозри (Çĕрпӳ р.) конюх-стахановец П. С. Семенов юлташ, вăл конюхра 1937 çултанпа ĕçлет.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Куславкка комбинатĕнчен килекен çырусем

2. Пĕри теприн çине йăвантарать

Комбинат продукци туса кăлармалли малтанах хатĕрленĕ графика тулларса пыраймасть. Вунвиçĕ кун хушшинче комплектпа тунă пĕр çурт та тиесе ярайман. Сăмахран, план тăрăх пĕтĕмпе 14 вагон алăк тиесе ямалла пулнă, анчах икĕ вагон кăна тиесе янă.

Комбинат тавра, яланхи пекех, кирлĕ-кирлĕ мар хăмасем сапаланса выртаççĕ. Цехсен ăшчиккисенче таса мар, кунта та хатĕр продукцисем, кирлĕ мар япаласем купи-купипе йĕркесĕр сапаланса выртаççĕ.

Цехсем хăйсем начар ĕçлесе пынине пытарас шутпа мĕнпур сăлтавсене пĕр-пĕрин çине йăвантараççĕ. Сăмахран, чĕртавар биржи çине йăвантараççĕ. Типĕтекен цехри работниксем те—хăма çуракан цех ассортиментлă продукци памасть тоççĕ, ытти цехсем вара пĕтĕм айăпа типĕтекен цех çине йăвантараççĕ. Механически цех та, складра тонни-тоннипе металл выртать пулин те, комбинатра пахалăхлă металл çукки çине перет, анчах складра выртакан металпа усă курасси çине çаврăнса та пăхмасть.

Чăннипе илсе пăхсан, ĕçсем пачах урăхла. Чĕртавар биржи ассортиментлă йывăç парса тăрайманни штабельрен мар, биржа начальникĕ комбинат директорĕн приказне пăтăнманнинчен килет. Чĕртавар биржи хăма çуракан цех валли çĕрĕк йывăççем парса тăрать. Хăма çуракан рамăсем пылчăк ăшне кĕрсе ӳкнĕ пекех тасамарланса пĕтнĕ. Çавна пула рамăсем час-часах простой тăваççĕ. Механически цех валли кирлĕ металсем складра тонни-тоннипе выртаççĕ. Анчах вĕсем ун çинчен пĕлме пачах та тăрăшмаççĕ.

Аслă диспетчер Горленко юлташ паян кирлĕ детальсене тăвассине кая хăварса пырать. Типĕтекен цех пĕр вагон çинех темиçе ассортиментлă материалсем тиесе ытти цехсен ĕçне чăрмантарать. Çак çитменлĕхсене технически контроль начальникĕ Пономарев юлташ асăрхаса тăмасть, вĕсене пĕтересшĕн тăрăшмасть. Унсăр пуçне детальсене пĕр çĕре çыхнă чăмăркара кирлĕ детальсем сахал пулаççĕ. Анчах контролерсем çакна пĕр тĕрĕслемесĕрех йышăнса штамп хураççĕ.

Çак çитменлĕхсем вĕсем комбинатри производство командирĕсем партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене йăлишĕн кăна вуласа тухнинчен, партконференци решенийĕсем вĕсем çине мĕн таран ответлă та хисеплĕ задачăсем хунине халиччен те тĕплĕн ăнланса илменнинчен килеççĕ. Кунта ĕç хăй майлă пулса пырасса шанаççĕ. Унсăр пуçне производствăри чылай командирсем штурмовщина тытăнĕнчен хăтăлайман-ха, вĕсем производствăри тасамарлăхпа культурăсăрлăха хирĕç тивĕçлипе кĕрешсе пымаççĕ.

Н. МРАНЬКА.

Производствăллă канашлусене вăхăтра ирттермелле

Предприятисенче производствăллă канашлусене тĕплĕн хатĕрленсе вăхăтра ирттерни ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пыма, çаван пекех малта пыракан çынсен опычĕсене сарса пыма хытă пулăшать. Профсоюз организацийĕсемпе хозяйственниксем производствăллă канашлусене ирттересси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхнă çĕрте çитменлĕхсем сахал пулаççĕ, план йĕркеллĕ тулса пырать, графикпа ĕçлени курăнать.

«Большевик» заводри скумпи цехĕнче производствăллă канашлусем часчасах пулса иртеççĕ. Канашлăва цех начальникĕ коммунист Щукин юлташ, тепĕр чухне унăн заместителĕ, вăлах завком председателĕн заместителĕ Горбунов юлташ ирттереççĕ.

— Эпир производствăллă канашлусене ĕç хыççăн ирттеретпĕр. Унта яланах производствăпа таччăн çыхăнса тăракан ыйтусене сӳтсе-яватпăр. Цех паян мĕнле ĕçлерĕ, агрегатсем, машинăсем простой туман-и, чĕртаварпа мĕнле усă курнă, камăн ĕçĕнче мĕнле кăлтăксем пулнă? Çаксем çинчен тĕплĕн сӳтсе-яватпăр. Çав ыйтусем тăрăх рабочисем тухса калаçаççĕ, сĕнӳсем параççĕ, уйрăм руководительсен ĕçне критиклеççĕ. Пирĕн канашлу яланах ĕçлĕ иртет, — тет цех начальникĕ Щукин юлташ.

Цех руководителĕсем канашлура палăртнă çитменлĕхсене пĕтересшĕн вăя хурса ĕçлеççĕ. Акă, рабочисем ĕç инструментĕсем юрăхсăрри çинчен, пăс сахал пани çинчен калаççĕ. Çаксене пĕтерес тĕлĕшпе цех администрацийĕ çийĕнчех мерăсем йышăнать.

Çак цехрах производствăри пысăкрах ыйтусем тăрăх техникăллă канашлусем ирттереççĕ. Кун пек чухне вăра завод дирекцинчен, бухгалтеринчен, планпа производство пайĕнчен те представительсем пулаççĕ.

— Нумаях та пулмасть, канашлура февраль уйăхĕнче эпир чĕртаварпа перекатлĕн усă курманни çинчен каласа пачĕç. Ку уйăхра эпир ăна юсаса пыратпăр, халĕ ĕçре чĕртаварпа тирпейлĕ усă курни сисĕнет, — терĕ Щукин юлташ.

Производствăллă канашлусем ирттерни цехра ытти участоксем ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыма пулăшать. Ахальтен мар ĕнтĕ, цех производство планне тултарас енĕпе ялахах малта пырать. Март уйăхĕнче çирĕп график тăрăх ĕçлесе плака хуллен 113 процент тултарса пырать, уйрăм кунсенче тата ытларах тултарать.

Древкомбинатри коммунист Прокопьев юлташ ертсе пыракан цех юлашки вăхăтра начар мар тĕслĕхсем кăтартать. Март уйăхĕ пуçланнăранпа вăл куллен хăйĕн планне ирттерсе тултарать. Акă, малтанхи 10 кунри плана цех 125,2 процент тултарнă. Уйрăм бригадăсем татах та паха результатсем кăтартаççĕ. Сăмахран, Алексеев юлташ бригади хуллен плана 200—300 процент, Козлов юлташ бригади 188 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра кунта нормăна тултарайманнисен хисепĕ чылаях чакрĕ.

Мартăн 14-мĕшĕнче цехра туса кăларакан продукци пахалăхĕ çинчен тата чĕртаварпа мĕнле усă курни çинчен сӳтсе-явнă. Канашлура тухса калакансем продукци пахалăхĕ пур чухне те мар çителĕклĕ пулнине кăтартса пачĕç. Çавăнтах тата чĕртаварпа, станоксемпе туллин усă курманни çинчен те асăрхаттарчĕç.

Халĕ ĕнтĕ цех администрацийĕ ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пырать.

Çитменлĕхсене пĕтерсе тухăçлăн ĕçлес тĕлĕшпе производствăллă канашлусем мĕнле пысăк пулăшу пани çинчен ытти цехсенчи смена мастерĕсем те каласа параççĕ. Акă, 3-мĕш номерлĕ цехри малта пыракан смена мастерĕ Байняшев юлташ çапла калать:

— Материал парса тăрсан манăн сменăри рабочисем пурте хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ, вĕсенчен çурри ытла стахановецсем. Çакна эпир малта пыракан рабочисен опычĕсене сарса пынипе тунă. Стахановецсен опычĕсем çинчен тăтăшах смена хыççăн пулса иртекен канашлура каласа паратпăр.

Анчах хăшпĕр çĕрте производствăллă канашлусем ирттерес ыйту çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ, вĕсене ячĕшĕн тенĕ пек çеç ирттереççĕ. Тĕслĕхшĕн «Труженик» заводах илсе кăтартма пулать.

Заводри уйрăм цехсенче производствăллă канашлăва 3—4 эрнере те пĕрре ирттермеççĕ. Ку вăл цехра çитменлĕхсем çуккине пĕлтермест, пачах урăхла. Столярнăй цех кулленхи плана 50—60 процент кăна тултарать, материалсемпе туллин усă курмаççĕ, хăшпĕр чухне простойсем пулаççĕ.

Анчах çаксем çинчен рабочисемпе пĕрле сӳтсе-явмаççĕ. Цех начальникĕ Большакова юлташ канашлу, пухасси çинчен сахал шухăшлать.

Древкомбинатăн уйрăм цехĕсенче те ку енĕпе çитменлĕхсем пур. Уйрăм профоргсем производствăллă канашлу ирттерес вырăнне «вăхăт çук» теме пăхаççĕ, хăйсем канашлусене сахал пулаççĕ. Çакăн пек, сăмахран, механически цеха паллă тумалла. Юлашки вăхăтра ку цехра канашлусем ирттермен. «Мĕн çинчен калаçас унта», теççĕ хăшпĕр мастерсем. Анчах цех ĕçĕнче куллен çитменлĕхсем курăнаççĕ: хăшпĕр чухне простой та, брак та пулать. Мĕншĕн-ха çавсем çинчен тĕплĕн калаçас мар?!

Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци промышленноçна транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес, вĕсене йĕркеллĕн ĕçлеттерес тĕлĕшпе татăклă решенисем йышăнчĕ. Çавсене пурнăçласа пырасси предприятисенчи партпине профсоюз тата комсомол организацийĕсен, хозяйственниксен тĕп задачи пулса тăрать. Çак енĕпе илсен производствăллă канашлусене вăхăтра тата йĕркеллĕ туса ирттересси питех те кирлĕ выркăнта тăмалла.

Хар. ЛИСИН.

Çĕмĕрле. (Хамăр корр.).

Военно-полевой хирурги эрни Шупашкарта

Мартăн 18-мĕшĕнчи лару

Мартăн 18-мĕшĕнче Шупашкарта военно-полевой хирурги эрни уçăлчĕ. Конференцине 100 çын ытла пухăннă, вĕсем хушшинче Хусанти медицина институтĕн доценчĕ, орденоносец Остроумов, РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ профессор Соколов, РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ профессор Шулутко, траxоматозпăй институт профессорĕ Чемолосов, врачсем Виноградов, Алеев, районсенчен чĕннĕ врачсем т. ыт.

Конференцине Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕ Соколов юлташ уçрĕ. Вăл хăйĕн умĕнхи сăмахĕнче халăхăн вăхăтри тĕнчери лару-тăру çинчен чарăнса тăрса, медицина работникĕсене оборонăна тĕреклетес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме чĕнчĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа—санитарнăй служба организацийĕ, хирурги ĕçĕн содержанийĕ, сортировка тата вăрçăра аманнисене сыватасси çинчен белофинсемпе çапăçнă çĕрте пулнă орденоносец Остроумов юлташ доклад туса пачĕ. Хăйĕн докладĕнче вăл Хĕрлĕ Çарăн санитарнăй службин мĕнле йĕркеленсе тăни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Унтан, белофинсене хирĕç пулнă вăрçă опычĕпе паллаштарчĕ.

—Белофинсем, — тет Остроумов юлташ, — хăйсен аманнă салтакĕсене час-часах персе пăрахса уях хăварнă пулсан, пирĕн мухтавлă медицина работникĕсем аманнă красноармеецсене пуля айĕнченех илсе каларса вилĕмрен хăтарнă. Тылра, госпитальсенче тата медико-санитарный чассенче врачсем сывăрма пĕлмесĕр хирурги ĕçне туса пынă. Çакăн пек хастаррăха медицина работникĕсем совет медицинăн халăхи çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе сыхăнтарнă. Сăмахран, операци умĕн алла Спасокукоцкий профессор хушнă методпа сунки вăрçă обстановкинче питĕ вырăнлă тата килĕшӳллĕ пулни палăрчĕ. Çавнашкалах, Вишневский профессор майĕпе ыраттармасăр операци туни те пысăк усă пачĕ. Унтан, юн нумай яни, столбняк чирĕнчен ӳте сыворотка яни, паллă профессорсем фронта пырса консультацисем панă, сурансене çĕнĕ майпа (çĕлемесĕр уçă хăварса) сыватни тата ыт. аманнă красноармеецсене сыватас ĕçре пит те пысăк пулăшу панă, вилнисен шучĕ сахалланнă.

Çитменлĕхсенчен Остроумов юлташ военно-полевой хирургине пĕлекен врачсемпе операци сестрисем сахал пулни çине кăтартса парать. Вĕсене докладчик мирлĕ вăхăтра хатĕрлеме, ку тĕлĕшрен медицина работникĕсене уйрăмăнах тăрăшса ĕçлеме чĕнет.

Вăрçă вăхăтĕнче куç аманнине сыватасси çинчен трахоматозпăй институт профессорĕ Чемолосов юлташ интереслă лекци вуласа пачĕ. Вăл хăйĕн лекцине икĕ пая уйăрса (куç мирлĕ вăхăтра тата вăрçă вăхăтĕнче аманни) вĕсем хушшинчи уйрăмлăха кăтартса пачĕ, куç амансан мĕнле пулăшу памалли çинчен ăнлантарчĕ. Малалла, докладчик хальхи вăрçăсенче куç аманни ӳссе пыни çинчен чарăнса тăчĕ. Сăмахран, Крым е вырăссемпе туркăсем хушшинче вăрçăра куç аманнисем ытти аманнисем хушшинче 0,6 процент кăна пулнă пулсан, хальхи вăрçăсенче вăл шут 12 процента çитет. Çакăнтан, — тет профессор Чемолосов, — куç чирĕсене, куç аманнине запасра тăракан кашни врачăнах пĕлмелле. Юлашкинчен вăл суккăрсене производствăна хутшăнтарасси çинчен каларĕ. Хусанти травматологи институтĕнче суккăрсенчен массаж тăвакан специалистсем хатĕрленĕ лайăх примера илсе, Чемолосов юлташ Чăваш республикинче суккăрсем ĕçлеме пултаракан производствăсем уçма ыйтать.

Чемолосов профессор хăйĕн лекцине муляжсемпе, рисуноксемпе ăнлантарса пачĕ. Унтан Шупашкарти трахоматозпăй институт куç аманнă çынсене сыватас тата пулăшу парас ĕçре пысăк, интереслă ĕçсем туса пыни курăнать.

Мартăн 19-мĕшĕнчи лару

Мартăн 19-мĕшĕнче, каçхи ларура, Хусантан килнĕ профессорсем Соколов — вăрçă районĕнче хырăм тата кăкăр кĕлетки амансан малтанхи, васкавлă пулăшу парасси çинчен тата Шулутко — пăшалпа персе шăмă хуçăлнине сыватасси çинчен докладсем туса пачĕç. Ку докладсем мирлĕ вăхăтра та питĕ интереслă пулса тăраçç, мĕншĕн тесен ун пек аманнисем кулленхи пурнăçра та час-часах пулаççĕ.

Профессор Соколов чи малтанах хырăмран тата кăкăр кĕлеткинчен аманнисем хушшинче вилекенсем нумайăшăн çинче чарăнса тăчĕ. Иртнĕ империализмлă вăрçăра ун пек аманнисенчен 12 сехетчен операци тунисем 50—55 проц., 20 сехетчен операци тунисем 55—65 проц. вилнĕ. Хальхи вăрçăсенче те вăл процент нумай чакман, вилекенсем 50—55 процент шутланаçç.

Мĕнрен килет вăл? Чи малтан операци срокĕнчен килет. Хырăм е кăкăр кĕлетки витĕр шалти органсем амансан операцие мĕн чухлĕ иртерех тăватăн, çавăн чухлĕ сывалма шанчăк пысăкрах, кая юлсан çын е юн кайнипе вăйсăрланса çитсе е инфекци пуçланса брюшина шыçнипе (перитонитпа) вилет. 24 сехетчен перитонит пулсан та, хырăма е кăкăр кĕлеткине юн тулса ларсан та, çынни тӳсмелле пулсан операци тума кирлĕ, анчах срок çавăнтан та ытларах иртсе кайсан операци туманни правило вырăннех пулса тăрать, мĕншĕн тесен пурпĕрех сыватма май килмест.

Малалла, ун пек аманнă çынсене мирлĕ вăхăтра — операци тăвакан больницăсене, вăрçă вăхăтĕнче — госпитальсене мĕнле ăсатни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вĕсене ăсатнă чух ытларах канăç пама тăрăшмалла. Çавăнпа силлентермен транспортпа (самолет, автомашина, носилка тата ыт.) ăсатмалла. Çиелтен стерилльĕ повязка çыхмалла. Çул çинче вăйран каясран е шок пуласран камфорăпа, морфипе тата ыт. укол тума юрать. Пыршăсем тулалла тухнă пулсан, вĕсене ниепле те шала тĕртсе ярса тӳрлетме юрамасть, инфекцирен сыхланмалла. Профессор Соколов тухса ӳкнĕ пыршăсене операциччен, вырăнта тӳрлетсен вилекенсем пушех нумай пулнине примерсемпе кăтартса парать. Çавнашкалах, ун пек сурансене вырăнта нимĕнпе çума та кирлĕ мар, стерилльĕ марлĕпе кăна çыхмалла.

Юлашкинчен профессор Соколов операци техники çинчен калаçрĕ. Вăл мĕнле аманнине кура, тĕрлĕрен пулать.

Шăмă пĕр вăхăтрах çиелтен ӳчĕ аманнипе хуçăлни тата шăмă пульпа аманни хушшинче ăрасналăх çук, — тет профессор Шулутко — вĕсем пĕр манерлĕ травма пулса тăраççĕ.

Кун пек сурансене малтанхи пулăшăва мирлĕ вăхăтра васкавлă пулăшу станцисем е ыттисем, вăрçă вăхăтĕнче чăсренчи медицина пункчĕсем параççĕ. Вĕсен умĕнче хуçăлнине сыватас задача мар, осложненирен сыхлас задача тăрать. Çак тĕлĕшрен шăмă хуçăлнă çынна пулăшу панă чух ака мĕн çинчен астумалла: 1) Çынăн пурнăçне сыхласси. Иывăр хуçăлнă çын ытла хытă ыратнипе шок пулса вăйсăрланса каясран ăна ăшăтмалла, чĕрине пулăшма. ыратнине çемçетме эмелсемпе уколсем тумалла. 2) Хуçăлнă вырăнта микропсенчен (инфекцирен) сыхласси. Ку тĕлĕшрен малтанхи пулăшу панă чух суран çине стерилльĕ повязка хумалла. 3) Хуçăлнă ал-урана сыхласа хăварас çи. Ĕлĕкхи вăрçăсенче ун пек чух шутласа тăмасăрах ал-урасене татни çем нумай пулнă. Сăмахран, Наполеон çарĕн паллă врачĕ Ларрей пĕр кăсрах 200 ал-ура таран татнă. Ку вăл ун пухне шăмă хуçăлнисене урăх майлă сыватма пĕлменнинчен килнĕ. Хальпир хуçăлнă ал-урасене май пур таранах сыхласа хăварас тетпĕр, кунта çыннине больницăна е госпителе мĕнле майпа илсе çитерни те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сăмахран, иртнĕ империализмлă вăрçăра Англи çарĕнче ура хуçăлсан Томас шинипе усă курма тытăнсан, ал-ура ваннисем хушшинче вилекенсем тӳрех 80 процентран 30 процента çитиччен чакнă. Çакна астуса, малтанхи пулăшу панă чух хуçăлнă ал-урана сиккеленмелле мар туса шинаран, е вăл çук пулсан, хăмаран-патакран майласа çыхса хумалла та, хăвăртрах больницăна е госпителе ăсатмалла. Шинине хунă чух пĕр сыппа кăна мар, юнашарти икĕ сыппа та сиккеленмелле мар тумалла.

Иртнĕ империализмлă вăрçăра сурансем хуртланса кайни пит нумай тулнă. Вара принц Альденбургский ӳранта хурт тупнă врачсене суда палалла тесе приказ кăларнă. Мирлĕ вăхăтра суранланни 6—8 сехетрен ытла иртмен пулсан, сурана айккинчен кассa илсе тасатса çĕлесе хураççĕ. Шутутко шучĕпе, вăл срока виçĕ сехетлен чакармалла. Анчах мыщăсем нумай вырăнта сурана тасатнă хыççăн пиявкесем çĕлеме кирлех те мар. Унпек çĕлесе лартнă хыççăн газовăй гангрена пулнисем тĕл пулкалаççĕ. Шулутко ертсе пыракан Хусанти клиникăра мыщăсем нумай çĕрти вырăна параланса амансан ĕриташ касса тасатаççĕ кăна, çĕлессине 5—8—10 кунран, пӳрленни палăрмасан, тин çĕлеççĕ. Çакăн пек тунинчен Шулутко клиники усă кăна курнă. Вăрçă вăхăтĕнче сурансем çинчен калаçнă чух пĕр врач кăна сăнарăма тăма пултараймасть, тата вăл çинче пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçарса пымалла пулать. Çавăнпа кунта сурана çĕлемелле мар. Финляндири ĕçсем çак метод усăллă пулнине кăтартса пачĕç.

Нумайĕшĕ вак шăмăсене каларса тăрахма тăрăшаççĕ. Вăл тĕрĕс мар. Шăмă татăкĕ мышцăна е надкостницăпа сыхăнса тăрать пулсан, ăна кăларса пăрахмалла мар, вырăнне юсас ăна лартмалла. Çапла туни хуçăлнăмма хăвăртрах сыпăнса çитме кăна пулăшать.

Госпиталь е больница умĕнче çакăн пек задачăсем тăраççĕ: сурана малалла осложненирен сыхласси, хуçăлнă шăмăсене сыпăнса çитиччен тӳрĕ тытса тăрасси, сывалас срока чакарасси тата хуçăлнă ал-урана ĕлĕкхи пекех ĕçлекен тăвасси. Хуçăлнă шăмăсем уйăрăлса тăмаççĕ пулсан гипс хумалла, уйăрăлса, чалăпса кайсан аппарат çине хурса туртмалла. Уйрăм клиникăсем ку ыйтура урăхларах çул тытаççĕ пулин те, профессор Шулутко гипс хурса сыватасси енне ытларах сулăнать.

Хуçăлнă вырăнта шăмă сыпăнмасăр суя сыпă пулса юлсан е тивĕçсĕр, чалăш сыпăнса ларсан 6—8 уйăх иртмесĕр операци тума кирлĕ мар.

Юлашкинчен профессор Шулутко медицина работникĕсене гипс техникине вĕренме чĕнчĕ.

К. ПАЙРАШ.

Медицина ыйтăвĕсемпе лекцисем

Ишлейри клуб çумĕнчи совет тăрăшнипе çак уйăхра медицина работникĕсене хутшăнтарса чылай темăсем тăрăх лекцисем иртерме палăртнă. Çак кунсенче «Тиф чирĕ тата унтан мĕнле сыхланмалла» темăпа Александров юлташ лекци туса пачĕ. Лекцине итлеме 200 çын ытла пухăннă.

СĔНТĔРВĂРРИ ХУЛИ

Сĕнтĕрвăрри—Чăваш республикинчи çичĕ хуласенчен пĕри.

Сĕнтĕрвăррине хула ятне пани нумаях пулмасть пулин те, унăн ячĕ — Мариинский Посад тени—тахçантанпах палланă пулнă.

Халĕ хула вырнаçнă вырăнта ĕлĕк Сĕнтĕр ятлă пылăх пулнă. Çак пылăха XVII ĕмĕртех çывăхри вырăс ялĕсенчен хресченсен хуçалăхĕсем куçса, Сĕнтĕр ятлă çĕр общести организацилеиĕ.

1624 çулта Михаил Федорович патша Сĕнтĕр ял обществине Сильвестр ятлă митрополита панă. Митрополит хӳтлесе пурăннипе çак Сĕнтĕр ялĕнчи кулаксем вăйланса пынă. Вĕсем çывăхри ялсенчи çынсене йӳнĕ хакпа ĕçлеттерсе усă курнă.

Сĕнтĕр ялĕнче суту-илӳ тата вăрман ĕçĕ-ремесласем нумай аталанса кайнă. Çавăн пек ĕçсемпе пурăнма май пуррине кура, таврари ялсенчи хресченсем нумайĕшĕ, çĕр пăрахса, куçса пынă. 1856 çулта Сĕнтĕр ялне—Мариинский посад, тесе ят панă.

1892 çулта Сĕнтĕвăрринче 2.400 çын пурăннă. Унта 15 койкăллăх больница, почта уйăмĕ, библиотека, 4 пуçламăш шкул пулнă. Тата кусемсĕр пуçне вăрман ĕçне вĕрентекен шкул пулнă. Çалăха вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен урăх ыйтăмпе усрамалли учрежденисем—3 чирку тата 4 часовня пулнă. Ун чухнехи вăхăтра Сĕнтĕрвăрринче купецсемпе кулаксем пуçпулса тăнă. Вĕсем таврари мĕнпур пурлăха, суту-илӳве, вăрман ĕçне хăйсен аллинче тытса пурăннă.

Октябрьти социализмлă аслă революци çав эксплоататорсене тĕп турĕ.

Революци хыççăн Сĕнтĕрвăрри сăнăпачĕ улшăнса çĕнелчĕ.

Чăвашсен автономиллĕ облаçĕ пулнă хыççăн Сĕнтĕрвăрри Шупашкар уезчĕн центрĕ пулса тăчĕ. 1925 çулта Сĕнтĕрвăррине хула ятне пани. 1927 çултанпа вăл—район центрĕ.

Хулара тата хула тавра революциччен пулман предприятисем çитĕнсе ларчĕç. Вĕсем: баржăсем тăвакан завод (Судоверфь), урапа-çуна тата катка-пичке завочĕ, хĕрлĕ ӳрех завочĕ, районри промкомбинат. Тата хулара промысла артелĕсем вăйлă ĕçлеççĕ. Хулара çĕвĕçсен, атă-пушмак çĕлекенсен, строительство материалĕсем хатĕрлекенсен артелĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Сĕнтĕрвăрри хули кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе республикăра чылай пысăк вырăн йышăнать. Кунта вăрман ĕçĕн техникумĕ, йывăçран тĕрлĕрен япаласем тăвас ĕçе вĕрентекен техникум, çĕрйĕркелӳпе мелиораци техникумĕ пур. Хулара кусемсĕр пуçне вăтам шкул, туллимар вăтам шкул тата пуçламăш шкулсем пур.

Хулара 80 койкăллăх больница пур. Унта 8 врач, 15 фельдшер ĕçлеççĕ. Нумай пулмасть шкул ачисем валли тата сивчиртен сыватма амбулаторисем уçнă. Хулара саслă кинотеатр. колхоз театрĕ, культура çуртĕ, мунча, библиотека, электростанци пур. Революци хыççăн икĕ сад лартса ĕрчетнĕ. Совет суту-илӳвĕ вăйлансах пырать. Хулара пысăк магазинсем 15 тата ларексем те чылай. Кашни кун виçĕ столовăй ĕçлеççĕ.

Анчах, çитĕнӳсемпе пĕрлех, ситменлĕхсем те пур-ха. Хулара электростанци тата мунча япăх ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçне çывăх вăхăтрах лайăхлатса яни кирлĕ.

ВЕРХИЛЕЕВ.

Прогульщиксене хӳтĕлеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри организацисемпе учрежденисенче ĕçлекен хăшпĕр работниксем ĕç дисциплинине пăсма халĕ те пăрахман-ха. Учреждени руководителĕсем прогульщиксене хирĕç кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Прогульщиксене хӳтĕлени те палăрать.

Хăшпĕр организацисенче отпуск памалли йĕркене пăхăнмаççĕ. Баймаш ялсоветĕнчи налог агентне Капралова пĕр уйăхлăх отпуск панă пулнă. Вăл отпуск вăхăтĕнче спекуляци туса çӳренĕ. Ялхуçалăх продукчĕсем илнĕ те тĕрлĕ хуласене кайса хаклă хакпа сутнă. Çакăн пек çĕрулми сутма кайсан ĕçе вăхăтра тухайман. Администраци хăй ирĕкĕпе ытлашши отпуск панине хисепе илмесĕр, 10 кун хушши прогул тунă.

Капралова çакăн чухлĕ прогул тунăлăн тата спекуляци ĕçне яваçнăшăн ирĕппĕн айăпламалла пулнă. Районри финанс пайĕн руководителĕсем Капралова ответ тыттарма шутламан. Пачах урăхла, закона пăсса прогульщика хӳтленĕ. Прогульщика айăпран хăтарас тĕлĕшпе Капралов ĕçе вăхăтра тухнă пек суя приказ сырасçĕ.

Райпрокуратура Капралов прогульщикăн ĕçĕсене шыраса тупрĕ, ĕçе суд аллине пама йышăнчĕ. Çавăн пекех прогульщика хӳтленĕшĕн районри финанс пайĕн заведующине Калинин юлташа та айăпламалла тунă.

Учрежденисен руководителĕсем прогульщиксене хӳтлени татах та пур. Районри 1-мĕш участокри халăх судĕ, 1940 çулти сентябрĕн 5-мĕшĕнче Акчикасси ялсоветĕнче ĕçлекен работниксем прогул туни çинчен район Советĕн исполкомне пĕлтернĕ пулнă. Çакăн хыççăн нумай вăхăт иртрĕ. Район Советĕн исполкомĕ прогульщиксен ĕçне паянхи кунччен те тĕрĕслемен. Акчикасси ялсоветĕнчи прогульщиксем пĕр айăпсăрах пурăнаççĕ.

Турханти сельпо председателĕ Ермаков прогул туни те нумай вăхăт иртрĕ. Халăх судĕ Ермаков çинчен ВКП(б) райкомне иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнчех пĕлтернĕ. Ку ĕç паянхи кунченех тĕрĕслесе килмен.

Баймаш ялĕнчи шкулта ĕçлекен хăшпĕр учительсем занятине 30 минута хушши кая юлса пынă. Çак прогульщиксем çинчен районри çутĕç пайне пĕлтернĕччĕ. Кунти пуçлăхсем те прогульщиксен ĕçне тĕрĕслемен. Çакăн пирки прогул тунă учительсем районри çутĕç пайĕн хӳтлĕхĕнче пĕр айăпсăрах тăрса юлчĕç.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче каларнă Указ ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшакан çирĕп закон пулса тăрать. Çак закона пăсма никама та ирĕк паман. Прокуратура органĕсен прогульщиксен ĕçне халех тăрă шыв çине кăлармалла. Çавăн пекех прогульщиксене хӳтлекенсене те ответ тыттарас пулать.

Н. ДАНИЛОВ.

Çăмăл водолазсем

Шупашкарти ОСВОД çумĕнче организацилеиĕ çăмăл водолазсен курсĕнчен вĕренсе тухнă Осипов, Плешкова, Махоткин, Трофимов, Леонов, Иванов юлташсем пур предметсемпе те «отлично» паллăсем илнĕ.

Трахомран сыватаççĕ

ТАВАЙ. Кармалти трахработник В. Ласков юлташ ялти колхозниксем хушшинче трахом чирне пĕтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Вăл трахом чирне хирĕç кĕрешесси çинчен каласусем туса ирттерет. Ласков юлташ кăçалхи çул 23 çынна трахомран сыватнă.

И. КОРНЕВ.

ХАЛĂХ ТĔН ÇИНЧЕН КАЛАНИ

Çылăх

(Вырăссен халланĕ)

Чухăн çын поп патне пынă та калать:

— Арăм мана сан пата çылăх кăçарттарма ячĕ, анчах мĕнле çылăхшăн ӳкĕнес-ши, пĕлместĕп: çук манăн çылăх.

— Çын вĕлермерĕн-и?

— Çук.

— Вăрламарăн-и?

— Çук.

— Çын арăмне хапсăнмарăн-и?

— Çук.

— Турра кĕлтурăн-и?

— Çук.

Поп тарăхса кайрĕ.

— Ăçтан вара эсĕ çылăхсăр, турра кĕлтуманскер? Çылăху кăçтăр тесе татти-сыпписĕр виçĕ кун хушши молитва вула.

Чухăн çын çавăн пек тунă та. Тăваттăмĕш кунхине поп чухăна тĕл пулнă та ыйтать:

— Ну, ĕçсем мĕлне пыраççĕ?

— Япăх, — тет чухăн çын, — çылăха кĕтĕм.

— Мĕнле вара?

— Çаплах çав! Виçĕ кун хушши турра кĕлтурăм, çав вăхăтра тырă вырмаллаччĕ.

Турă хушнă хак

(Вырăссен халланĕ)

Чухăн çынна тикĕт кирлĕ пулнă, ялта ăна ниçта та тупса илме май пулман. Вăл поп патне пынă та икĕ кĕрепенке тикĕт илме хăкласа. Попĕ кĕрепенке тикĕтшĕн пĕр тенкĕ ыйтать.

— Хаклă! — тет чухăн çын.

— Пĕртте хаклă мар! Турă хушнă хак.

Чухăн çын икĕ тенкĕ тӳлесе тикĕт илнĕ, урапине сĕрнĕ те хулана кайнă.

Хуларан тавăрăнсан чухăн çын попа тĕл пулнă та калать:

— Мĕнле капла? Эсĕ кĕрепенкешĕн пĕрер тенкĕ илтĕн, хулара тикĕт кĕрепенки вунă пус тăрать. Шалтах тĕлĕнмелле!

— Хулара унта базар хакĕ, — тет поп, — эпĕ сантан турă хушнă хăха илтĕм, пĕр кĕрепенкешĕн вунă пус хама валли илтĕм, тăхăрвунă пусне, май килсенех, турра паратăп.

(«Безбожник» хаçатран).

Европăпа Африкăри фронтсенче

(Мартăн 11-мĕшпе 18-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Çуркунне пуçланнă май вăрçă пыраханчи пысăк фронтсенче вăрçă ĕçĕсем сисĕнмеллех вăйланса тата сарăлса пыраççĕ.

Икĕ уйăх хушши чылаях лăпкă тăнă хыççăн Англипе Германи сывлăшçар вăйĕсем анлă операцисем сарса пыраççĕ, çав операцисене питех те нумай самолетсем хутшăнаççĕ.

Англин самолетсенчен сыхланмалли оборонин тата истребительсен авиацийĕн вăйĕсемпе средствисене сапаласа ярас тесе, Германи авиацийĕ Шотланди патĕнчен пуçласа Англин кăнтăрти çыранĕ патне çити сарăлса выртакан питех те пысăк фронтра Англири объектсем çине пыра-çыра тапăнать. Англичансен промышленноçлă центрĕсемпе портлă хулисем çине авиацин пысăк соединенийĕсем бомбăсем пырса пăрахаççĕ. Ыран мартăн 13-мĕш тенĕ чух тата ыран мартăн 14-мĕш тенĕ чух çĕрле Ливерпульпа Глазго çине уйрăмах вăйлăн пырса тапăннă, ыран мартăн 14-мĕш тенĕ чух çĕрле Германин темиçе çĕр бомбардировщикĕ пĕр вăхăтрах 7 аэродром çине тата портлă 20 хула çине бомбăсем пырса пăрахнă. Германири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çакă вăл Германин сывлăш-çар флочĕ Великобритание хирĕç туса ирттернĕ чи пысăк операци пулнă.

Англи авиацийĕ те Германин Бельгипе Çурçĕр Франци çыранĕсенче вырнаçса тăракан аэродромĕсем çине пĕрмаях бомбăсем пыра-пыра пăрахать. Вăл Çурçĕр тата Çурçĕр-Хĕвел анăç Германири çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахать. Англи авиацийĕ юлашки вăхăтра Берлин, Бремен тата Гамбург çине пырса тапăнни çакна кăтартса парать: Англи командованийĕ 1939—1940 çулсенчи хĕллехи опыта шута илнĕ, хĕлле хăйĕн авиацийĕн йышшипе пахалăхне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Ютçĕршывсенчи хаçатсем шута илнĕ тăрăх, Англин метрополири сывлăш-çар вăйĕсенче 6 пин самолетран кая мар шутланать.

* * *

Ливире Англин малти чăсĕсем Сирт пушхирне пырса кĕнĕ хыççăн вăрçă ĕçĕсем лăпланнă, унта халĕ те лăпкă тăрать.

Киренаикăра Италин 10-мĕш çарне çĕмĕрсе тăкнă Англи войскисем Ливире хăйсен стратеги тĕлĕшĕнчи положенине чылаях лайăхлатнă. Анчах та Англи командованийĕ çак обстановкăпа пĕтĕмĕшпех усă курма, Ливири пĕтĕм плацдарма хăй аллине çавăрса илме пултарайман, мĕншĕн тесен Англи войскисем ывăнса çитнĕ, вĕсен чылаях пысăк çухатусем пулнă тата коммуникацисем питĕ вăрăма чăсăлса выртаççĕ.

Англичансен наступленийĕнче пуçланнă перерывпа усă курса, Итали командованийĕ Италирен Триполитание çĕнĕ дивизисем илсе пырать, 10-мĕш çара çĕнĕлле йĕркелесе яма тăрăшать. Триполитанире Германи чаçĕсен хисепне ӳстерни Итали войскисене вăйлатас ĕçре питех те пысăк выçăн йышăнса тăрать. Лондонри «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат пĕлнĕ тăрăх, Италин Триполитанири 10—11 дивизийĕсене вăйлатма унта Германин 3 дивизине илсе пынă, вĕсенчен пĕри — танклă дивизи. Çакна май ĕнтĕ çапла шутлама пулать: кунта противниксен вăйĕсем пĕр евĕрлех. Çавăнпа та Вăтаçĕр тинĕсĕнчи плацдарман çак участокĕнче çĕнĕ наступленисем пуçласа яма унта çĕнĕрен нумай çын тата техникăллă средствăсем куçарса пымалла пулать.

Çакна паллă тăвас пулать: Германи войскисем Британи утравĕсем çине тапăнса кĕрес хăрушлăх ӳснине кура, Англи командованийĕн метрополири хĕçпăшаллă вăйсен шучĕпе Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çара вăйлатас тĕлĕшпе асăрхаписа ĕçлеме тивет. Ютçĕршывсенчи çар обозревателĕсем кăтартса панă тăрăх, вăрçă пуçланнă вăхăтра Англин метрополири çарĕнче 800 пин çынна яхăн шутланнă пулсан, хальхи вăхăтра вăл 2 миллион çынна çити ӳснĕ, унăн составĕнче 50 дивизи ытла шутланать.

Иртнĕ эрне хушшинче Хĕвелтухăç Африкăри лару-тăру нумаях улшăнман. Эритрейăра, Керенпа Адди-Угри районĕсенче (Асмăрăран кăнтăр еннелле 50 километрта) халичленхи пекех хаяр çапăçусем пыраççĕ. Англичансем пĕлтернĕ тăрăх, кунта итальянецсем хăйсен чи лайăх войскисене 40 пин çын пухса тăратнă, Асмăрăпа Массауа патне сĕмĕрсе тухма тăрăшакан англичансен атакисене 5 эрне хушши ĕнтĕ сире-сире ярраççĕ. Вырăн сăртлăтуллă пулнисĕр пуçне, кунта çанталăк шăрăхланса пыни те вăрçă ĕçĕсене чăрмантарать. Анчах та Эритрейăра англичансем малалла каяймасăр тăраççĕ пулсан, ун вырăнне вĕсен войскисем Итали Сомалийĕнчи хăвăрт малалла кайса пыраççĕ тата Британи Сомалийĕнче çитĕнӳсем туса пыраççĕ. Британи Сомалийĕнчи пысăк тинĕс-çар портне — Берберăна (Аден заливĕн çыранĕнче) иртнĕ çулти август уйăхĕнче итальянецсем туртса илнĕ пулнă, мартăн 16-мĕшĕнче ăна Англин десантлă чăсĕсем каялла туртса илнĕ.

Англири обозревательсем пĕлтернĕ тăрăх, Абиссинире Англи войскисем 13 енчен наступлени туса пыраççĕ. Абиссини çинелле çурçĕр-хĕвеланăç енчен наступлени туса пыракан англичансен чăсĕсене хирĕç Гондар патĕнче тата Дебра-Маркос районĕнче итальянецсем вăйлăн çапăçаççĕ. Курмукран наступлени тума пуçланă англичансен колонни Абиссини территорийĕ çине 70 километр шалалла кĕнĕ тата Афоду пунктне туртса илнĕ. Абиссинин кăнтăр пайĕнче кĕрешекен абиссинец-партизансем мартăн 13-мĕшĕнче Явеллона туртса илнĕ. (Мега патĕнчен çурçĕр еннелле 112 километрта).

* * *

Албанири вăрçă ĕçĕсем майĕпен анлăн сарăлса пыраççĕ. Греци командованийĕ хăй умне стратеги тĕлĕшĕнчен лартнă задачăна, урăхла каласан, Берат, Эльбасан районĕсенчен итальянецсене хĕссе кăларас тата Валона районĕнче тĕреклĕн çирĕпленсе тăрас задачăна пурнăçа кĕртеймен.

Итали командованийĕ Албанири фронтра 25 дивизи пухса тăратнă, халĕ вăл наступленийĕ ĕçсем тума тытăнать. Чăнах та, Итали войскисен наступленине грексем сирсе янă, анчах та Итали войскисен фронтăн тĕрлĕ участокĕсенчи атакисем ытларах пысăк наступлени тума хатĕрленнине пĕлтереççĕ пулас. Çав атакăсене Италин 9 дивизийĕнчи чăсĕсем хутшăнаççĕ.

Майор К. ВАСИЛЬЕВ.

Вăрман хатĕрлес, турттарса кăларас тата кирлĕ пункта турттарса пырас тĕлĕшпе обязательнăй йĕркепе панă плана Чăваш республикинчи районсем мĕнле тултарса пынине кăтартакан СВОДКА

(1941 çулти мартăн 15-мĕшне, процентпа)

Районсем	Хатĕрленĕ	Турттарнă	Кирлĕ пункта турттарса пынă
Улатăр	66,2	41,8	63,1
Кувакино	46,9	51,6	43,8
Первомайски	45,5	70,5	29,4
Пăрачкав	89,8	35,0	30,5
Чкаловски	76,0	33,0	40,1
Комсомольски	62,9	47,0	55,2
Йĕпреç	54,6	45,0	36,4
Канаш	58,4	—	43,5
Шăхасан	86,9	—	71,1
Вăрмар	77,7	—	59,1
Тăвай	93,4	—	73,8
Вăрнар	70,0	61,8	50,5
Калинински	85,0	67,0	75,2
Красноармейски	107,2	82,6	93,9
Çĕмĕрле	61,4	65,3	43,0
Элĕк	89,0	46,0	54,4
Хĕрлĕ Чутай	72,8	55,0	62,9
Советски	96,4	61,0	134,5
Етĕрне	70,4	—	71,1
Сĕнтĕр	59,2	—	64,5
Сĕнтĕрвăрри	57,4	—	49,5
Шупашкар	96,4	—	75,6
Ишлей	91,3	—	48,1
Октябрьски	72,6	—	65,3
Шăмăршă	64,4	68,8	50,5
Елчĕк	107,4	—	46,9
Республикипе	68,5	68,0	50,9

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ уйрăм кĕнекепе тухать

Çак кунсенче Чăвашсен Государство Издательствин ялхуçалăхпа массăллă секторĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АССР Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленине чăвашла куçарса уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларать. Кĕнеке тиражĕ 6.000 экземпляр пулать.

Н. Юм.

Искусство ĕçĕсен Управленийĕнче

«Нарспи» драмăна художество енчен пысăк мастерлăхпа лартнăшăн искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕ Чăвашсен Государство Академи театрĕн чăваш труппине тата режиссер Л. Н. Родионов, художествăллă руководитель К. И. Иванов, художник Зайцев тата театр директорĕн заместителĕ Мордкович юлташсене уйрăмăн тав тунă.

Артистсенчен, хăйсен ролĕсенче ăнăçлăн вылянăшăн Ургалкин, Медиков, Молодов, Долгова тата Шорникова юлташсене канмалли çурта кайма путевкăсем парса премиленĕ. Çавăн пекех, театр дирекцийĕ «Нарспи» спектакльте лайăх вылянăшăн Петрова артисткăпа Семенов артиста тав тунă.

Маляриологсен конференцийĕ

Мартăн 17-мĕшĕнче Мускава ултă пысăк хулари: Сталинградри, Куйбышеври, Хусанти, Новосибирскри, Киеври тата Ростоври маляри станцийĕсенче ĕçлекен научнăй работниксен конференцийĕ уçăлнă. Вĕсем пысăк хуласенче тата пысăк юханшыв çинче маляри чирĕпе кĕрешес ыйтăва сӳтсеявраççĕ.

Хусанта çак темăпа В. Магницкая, С. Байгулова, Е. Борисова врачсем-маляриологсем; С. Чуева, А. Милицина энтомологсем; Б. Григорьев гидротехник научнăй ĕçсем хатĕрлерĕç.

Хусанти маляри станцийĕ çак специалистсем пулăшнипе хулари тата хула таврашĕнчи маляриллĕ вырăнсене тĕпчесе сăнарĕ. Халĕ вăл конференци умĕн научнăй докладсем, картăсем, диаграммăсем туса хатĕрленĕ.

Г. Макаров.

СУД

Колхоз лашине вĕлернĕшĕн

Канаш районĕнчи 2-мĕш участокри халăх судĕ çак кунсенче колхоз пурлăхне çаратса пурăннă çынсен ĕçне пăхса тухрĕ. «Динамо» колхоз членĕ К. Дмитриев колхозран лаша илсе вăрманз хăй валли вутă тиеме кайнă пулнă. Лав çине нумай тиенĕ пирки, лаша туртайман. Вара вăл лашана хĕнесе вĕлернĕ.

Халăх судĕ Дмитриева, Уголовн